24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
ЯНВАРЬ
31
ЭРНЕКУН
25 (5740) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Республикăри парторганизацисен çывăхри задачисем

Çак кунсенче ВКП(б) Обкомĕн черетлĕ V пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум 1940 çулти ялхуçалăх ĕçĕсен итогĕсемпе çуракипе хатĕрленес ĕçри задачăсем çинчен И. М. Чарыков юлташ доклад не тата Канаш, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче партиллĕ пропагандăпа агитациллĕ-массăллă ĕç мĕнле тăни çинчен Репкинпа Кузьмин юлташсен докладне итлесе сӳтсе-явăрĕ. Вăл ыйтусем тăрăх тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

Ялхуçалăхĕ çинчен ВКП(б) XVIII съезчĕ йышăннă решенисене тата ун хыççăн ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ йышăннă постановленисене пурнăçа кĕртсе пырса, Чăваш республикинчи большевиксем колхозсен обществăллă хуçалăхне тĕреклетес, артель производствине пур енĕпе те аталантарса пырас, колхозниксен материалла-культурăллă пурнăçне лайăхлатса пырас ĕçре çĕнĕ çĕнтерӳсем турĕç. Партипе правительство тата Сталин юлташ социализмлă ялхуçалăхне çĕклессишĕн куллен тăрăшни колхозниксен интересне, вĕсен активлăхне ӳстерчĕ, вĕсене çĕнĕ те пысăк çитĕнӳсемшĕн кĕрешме хавхалантарчĕ. Колхозсем çĕрпе лайăхрах усă курма пуçларĕç, ĕçĕн пахалăхĕпе тухăçлăхне хăпартса пыраççĕ. Парти организацисем ялхуçалăхне лайăхрах ертсе пыма тытăнни, агротехника ĕçĕсене комплекслăн пурнăçа кĕртсе пыни, колхозсенче дисциплина лайăхланса пыни, — çаксем пурте ялхуçалăх культурисен тухăçне ӳстерме май пачĕç. Республика иртнĕ çулта вăтамран гектар пуçне 12 центнер ытларах тырпул туса илчĕ. 122 колхоз, 339 бригада гектар пуçне 100 пăт е ытларах тырă туса илнĕ. Вăрнар районĕ 1940 çулта гектар пуçне вăтамран 16,2 центнер, вăл районри Сталин ячĕпе тăракан колхоз вара кашни гектартан 180 пăт тырпул туса илнĕ.

Колхозсенче тырпула пухса кĕрес ĕçе чылай кĕске вăхăтра туса ирттернĕ. Кĕрхи тырăсене лайăх тата вăхăтра акса хăварнă. Кĕрхи çĕртме тăвас плана 99 процент тултарнă. Çак çитĕнӳсене тăвассишĕн кĕрешсе, республикăри парторганизацисем питех те паха опыт туянчĕç.

Анчах, мĕнпур условисемпе туллин усă курнă пулсан, эпир татах та пысăкрах çитĕнӳсем тума пултарнă. Пирĕн ĕçре халичченех пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Пирĕн колхозсенче ăшăх сухаланине, алăпа тата кондициллĕ мар вăрлăхпа акнине, ĕçсене кая юлса тунине, çавна пула пысăк сухатусем тунине халичченех тĕл пулма пулать. Çавăн пирки вара республика иртнĕ çулта тĕштыр культурисен тухăçлăхне ӳстерме государство панă заданине тата тăванлă республикăсен ăмăртăвне хутшăнса илнĕ обязательствăсене тултараймарĕ. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ начар ертсе пынипе, республика тракторпа тумалли ĕçсен планне те тултараймарĕ. Уйрăмăнах Куславкка, Етĕрне, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Шăмăршă районĕсенчи МТС-сем начар ĕçленĕ, вĕсем плана 45—59 процент кăна тултарнă. Пленум çакна та палăртса хăварчĕ: ВКП(б) Обком бюровĕпе ЧАССР Совнаркомĕ Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, партипе советăн районсенчи организацисене вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме вăхăтра кăтартса паман, çавăн пирки республикăра государствăн обществăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне тултарман. Вылăх-чĕрлĕх вилни нумай тĕл пулать, уйрăмăнах çамрăк вылăхсене сыхласа усрас ĕç начар. Вылăх-чĕрлĕх продуктивлăхĕ питех те аялта тăрать-ха.

Çураки кунран кунах çывхарса килет пулин те, çурхи ĕçсене туса иртерме хатĕрленесси вăрахăн пулса пырать. Вăрлăхсене 59 процент кăна сортланă, тракторсене 34 процент кăна юсаса хатĕрленĕ, уйхире тислĕк кăлараc плана 23 процент çеç тултарнă т. ыт. те. Вăрлăхсене сортлас ĕçре уйрăмăнах Комсомольский Етĕрне, Канаш, Пăрачкав, Советский районсем юлса пыраççĕ.

Чылай районсенче кадрсем хатĕрлес ĕç çине, агротехникăпа зоотехникăна цропагандăласси çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ. Партин облаçри XXI конференцийĕ коллективизаци ĕçне туса çитерме хушса хăварнине парторганизацисем тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Хăшпĕр вырăнсенче единоличниксене тивĕççĕр сăлтавсемпех колхоза илмесĕр тăнисем те пулкалаç.

ВКП(б) Обкомĕн V пленумĕ çак çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме хушрĕ. «ВКП(б) Обкомĕн бюроне тата ЧАССР Совнаркомне, ВКП(б) райкомĕсемпе райсоветсен исполкомĕсене çакна тума хушас, — терĕ пленум хăйĕн резолюцийĕнче, — çураки ĕçĕсене тума кашни колхоза тата МТ Станцине вăхăтра хатĕрлесе çитерес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмалла, вăрлăх тата страховой фондсене пĕтĕмĕшпех лайăх пахалăхлă вăрлăхсем хывса хăварасси çине, тракторсемпе ялхуçалăх машинисене палăртнă сроксенче тата лайăх пахалăхпа юсаса çитересси çине, лашасене çурхи ĕçсем валли хатĕрлесси, ĕç вăйĕпе туртăм вăйне участоксем тăрăх тĕрĕс вырнаçтарса тухасси çине уйрăмăнах çавăрăнса пăхмалла».

Организацияллĕ тата массăллă-политикăллă ĕçе вăйлатса, Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе социализмлă ăмăртăва сарса ярса, колхозниксен анлă массисене кашни гектартан 100 пăт тырă туса илессишĕн, çуракине ирттерме ăнăçлăн хатĕрленессишĕн, вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес хăвăртлăхсене ӳстерессишĕн, унăн продуктивлăхне хăпартассишĕн кĕрешме мобилизацилемелле. Çакна тума чĕнет пленум республикăри парторганизацисене.

«ВКП(б) Обком бюровĕн хресчен хуçалăхĕсене колхоза явăçтарас тĕлĕшпе Облаçри XXI партконференци йышăннă решенине пурнăçа кĕртме май паракан ĕçсене тумалла... коллективизаци енĕпе ĕçе лайăхлатма практикăллă мерăсем йышăнмалла», тесе хушса хăварчĕ пленум.

Партиллĕ пропагандăпа агитациллĕ-массăллă ĕç пирки тăракан ыйтăва та пленум пысăк тимлĕхпе сӳтсе-явăрĕ. Докладсенче тата тухса каланисенче палăрнă тăрăх, çак ĕçре пирĕн парторганизацисем чылай çитĕнӳсем туни сисĕнет. Парти, совет тата хуçалăх ĕçĕнчи кадрсем марксизм-ленинизм теорине пысăк интереспа вĕренеççĕ. Харпăрхăй тĕллĕн вĕренес меслет кашни коммунистăн, кашни интеллигентăн йăлине кĕрсе пырать. Партиллĕ пропагандăпа большевикла агитаци политикăллă тата хуçалăхлă задачăсене татса парас ĕçре, ĕççыннисене коммунистла воспитани парас ĕçре пысăк результатсем параççĕ. Большевизм историне вĕренесси партиллĕ кадрсен кулленхи юратнă ĕçĕ пулса тăчĕ.

Çапах та, Канаш тата Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи партиллĕ пропагандăпа агитациллĕ-массăллă ĕçре пысăк çитменлĕхсемех пур. Ертсе пырас ĕçри чылай работниксем халĕ те хăйсен теориллĕ пĕлĕвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ, коммунистсем нумайĕшĕ Октябрьченхи тапхăра çеç вĕренеççĕ. Канаш тата Хĕрлĕ Чутай райкомĕсем партиллĕ пропаганда ĕçне çителĕксĕр ертсе пыраççĕ. Райкомсен тата пуçламăш парторганизацисен секретарĕсем устав хушнине коммунистсем мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăмаççĕ, юлташла каласусене сайра-хутра кăна ирттереççĕ, хăйсен пĕлĕвне ӳстерсе пыман коммунистсене хирĕç партири обществăллă шухăша çĕклемеççĕ. ВКП(б) Канаш тата Хĕрлĕ Чутай райкомĕсем комсомолри пропаганда ĕçне уйрăмăнах çителĕксĕр ертсе пыраççĕ. Чылай чухне агитаци ĕçне практикăллă задачăсемпе çыхăнтармасăр туса пыраççĕ. ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ партиллĕ пропагандăн, политикăллă агитацин пахалăхĕпе содержанине тăтăшах тĕрĕслесе тăман.

Пленум ВКП(б) Канаш тата Хĕрлĕ Чутай райкомĕсене партиллĕ пропагандăпа агитаци ĕçне лайăхлатма хушса хăварчĕ, вăл ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли мерăсене палăртрĕ.

Пĕтĕм тĕнчери обстановка йывăрланса пынă май, пропагандăпа агитаци ĕçĕн задачисем ӳссе пыраççĕ. Çĕршывăн хуçалăхлă тата оборонăллă хăватне малалла тĕреклетсе пырассишĕн, СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕсене пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртессишĕн, ĕç дисциплинипе ĕç тухăçлăхне хăпартассишĕн, совет обществин моралле-политикăллă пĕрлĕхне тата СССР халăхĕсен туслăхне малалла та çирĕплетсе пырассишĕн кĕрешме ĕççыннисене мобилизацилесси — кашни пропагандистăн тата агитаторăн тĕп задачи пулса тăмалла.

Парти райкомĕсемпе пуçламăш организацисен секретарĕсен пропагандăпа агитаци ĕçне, коммунистсем харпăрхăй тĕллĕн мĕнле вĕреннине куллен тĕрĕслесе пымалла. Парти тата совет ĕçĕнчи ертсе пыракан работниксем парти активĕ умĕнче, рабочисемпе колхозниксем умĕнче политикăллă тата теориллĕ докладсем тăвас йĕркене ĕçе кĕртмелле, тесе хушса хăварчĕ пленум райкомсене. Çакăн пек туни ертсе пыракан работниксен ответлăхне ӳстерет, вĕсене хăйсен пĕлĕвĕсене пысăклатма хавхалантарать.

Политикăллă агитаци ĕçне те çĕнĕлле йĕркелесе ямалла. Агитаци кулленхи конкретлă ĕççемпе çыхăнса тăмалла, вăл тапăнса пыракан агитаци пулмалла. Политикăллă агитацине халĕ суйлав кампанине ăнăçлăн ирттерес, социализмлă ăмăртăва сарса пырас, çуракине ăнăçлăн хатĕрленес енĕпе туса пымалла. Агитаторсемпе хăйсемпе ĕçлессине те вăйлатмалла.

ВКП(б) Обком Пленумĕн решенийĕсем республикăри парторганизацисем умне пысăк задачăсем кăларса тăратаççĕ. Çав задачăсене пурнăçа кĕртесси — парторганизацисен паянхи хисеплĕ обязанноçĕ пулса тăрать.

УЙРĂМ ОКРУГСЕНЧИ СУЙЛАВ КАМПАНИЙĔ

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕнче

1941 çулти январĕн 28-мĕшĕнче Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн ларăвĕ пулса иртрĕ, унта уйрăм округсем тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне тата вырăнти советсене депутатсем суйлама хатĕрленес ĕç мĕнле тăни çинчен сӳтсе-явăрĕç.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ çитес суйлавсене хатĕрленсе ирттерес кампанире лайăх ĕççене те, çитменлĕхсене те палăртрĕ. Суйлавсем пулса иртекен районсенчи советсен исполкомĕсем нумайĕшĕ суйлава хатĕрленсе ирттерме организацияллĕ ĕççене СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ тата ЧАССР Верховный Совечĕн Президиумĕ йышăннă Указсенче кăтартнă срокра тунă. Çав исполкомсем суйлав участокĕсене, округĕсене тăвас тата суйлав комиссисен составĕсене çирĕплетес ĕççене суйлав положенине çирĕп пăхăнса туса пынă. Суйлавçăсен списокĕсене пурне те пăхса тухма янă варĕн 27-мĕш тĕлне курăнмалли вырăнсене кăларса çакнă.

Суйлав комиссисем, агитаторсем ĕçе тытăннă. Агитаторсем суйлавçăсене Сталинла Конституци, суйлав Положенийĕ çинчен ăнлантарса параççĕ. Советсен исполкомĕсем суйлав участокĕсенчи пурлăхсене йĕркелеççĕ.

Анчах та районри Советсен исполкомĕсенчен хăшпĕрисем суйлава хатĕрленес ĕçе тивĕçлипе ертсе пымаççĕ. Ишлей райсовет исполкомĕ суйлав комиссисенче ĕçлеме çынсем уйăрас тĕлĕшпе пулнă колхозниксен пухăвĕсен протоколĕсене йĕркелесси çине сахал çаврăнса пăхнă. Çапла «Восход» тата Киров, Доронин ячĕпе тăракан колхозсенчи пухусенче миçе çын пулнисене кăтартман. Вăрмар райсовет исполкомĕ участокри суйлав комисси составне судпа айăпланнă çынна кĕртнĕ.

Сĕнтĕр райсовет исполкомĕ участокри суйлав комиссине Волков юлташа пуçламăш тата вăтам шкулсенче ĕçлекенсен профсоюзĕн селькомĕнчен тесе кĕртнĕ. Анчах Волков çак союзăн членĕ пулман, ăна районри потребкоопераци союзĕнче ĕçлекенсен коллективĕ тăратнă пулнă, вăл унта та члента тăман. Ишлей районĕнчи Оточево ялсовет исполкомĕн председателĕ исполком членĕсене пухса калаçмасăрах округсенчи суйлав комиссисен составне çирĕплетесси çинчен «решени» йышăннă.

Ĕççынни депутачĕсен чылай районсенчи тата ялсенчи Совечĕсен исполкомĕсем участоксенчи суйлав комиссисен членĕсем пулма çынсем уйăрнă колхозсен ячĕсене пăтраштарнă. Кузнецов юлташа «Красная Горка» колхоз членĕсем уйăрнă пулнă, Сĕнтĕр райсовет исполкомĕ ăна «Радио» колхозран тесе çырнă. Кунашкал фактсем ытти районсенче те пулнă.

Суйлавçăсен списокĕсене кăларса çакас срока пăхăнманнисем те пулнă. Çĕрлĕ Чутай ялсовет исполкомĕ суйлавçăсен списокне январĕн 28-мĕшĕ тĕлне те туса пĕтермен.

Уйрăм районсенче суйлав участокĕсенчи пурлăхсем çине нимĕн ответсăр пăхаççĕ. Ишлей районĕнчи Мамга ялсоветĕнче урнăна çухатнă, кабинăна çĕмĕрсе пĕтернĕ, юлашкисене çунтарма тытăннă. Октябрьский районри Покровский ялсоветĕнче суйлав пурлăхĕсем çунта-кунта сапаланса выртаççĕ.

ЧАССР Верховный Совечĕн Президиумĕ вулав çурчĕсем, клубсем суйлав кампанине çителĕксĕр хутшăнса ĕçленине палăртрĕ, çак ĕçе вăйлатма хушрĕ.

Президиум асăннă çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме, суйлав кунне пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитме кирлине пур райсоветсен исполкомĕсене те татăклăн кăтартса хăварчĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ Степан Ефимович **Белолипецкий** юлташ. Вăрмар районĕнчи «Арабось» колхоз членĕсен тата Куславкка комбинатĕнчи рабочисемпе служащисен тата инженерно-технически работниксен пухăвĕсем Белолипецкий юлташа СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама кандидата тăратнă.

Степан Ефимович Белолипецкий

Степан Ефимович Белолипецкий 1905 çулта Тамбов облаçĕн Жердевский районĕнче Сукмановка ялĕнче, вăтам хресчен семьинче çуралнă.

1926 çулта С. Е. Белолипецкий юлташ комсомол ретне кĕнĕ. Икĕ çул иртсен, 1928 çулти май уйăхĕнче, ăна ялти комсомол ячейкин секретарне суйлаççĕ. Комсомолецсем Белолипецкий юлташ ертсе пынипе ялăн обществăллă пурнăçĕнче хастарлă хутшăнса ĕçленĕ, кулаксен ирсĕр ĕçĕсене тăрăшыв çине кăларса пынă. Çак ĕçсем кулаксен, бандитсен кăмăлне кайман. Вĕсем 1927 çулта Белолипецкин килçуртне вут тĕртсе çунтарса яраççĕ. Çак вăхăтрах комсомолец Степан Белолипецкий суранланать. Ку ĕнтĕ — Белолипецкий юлташ тĕлĕшĕнчен кулаксем тунă иккĕмĕш ĕç пулнă. Унчен чылай маларах, 1921 çулта, Тамбов губернинче, Антонов бандине çĕмĕрнĕ вăхăтра, Белолипецкин ашшĕ, Ефим Степанович, Жердевскри ревком работникĕсене хăй патĕнче пытарса пурăннăшăн, бандитсем Белолипецкисен хуçалăхне çĕмĕрсе тăкнă пулнă.

Комсомолец Степан Ефимович Белолипецкине тăшмансем шăл хăйрани кимĕн чухлĕ те хăрушă пулман. Вăл ялта хăйĕн вăйне татах темиçе хут ӳстерсе, пысăк хастарлăхпа ĕçлесе пынă.

1929 çулхи ноябрь уйăхĕнче ăна Сукмановка ялсовет председателĕн заместительне суйлаççĕ. 1930 çулти июнь уйăхĕнчен пуçласа 1931 çулччен вăл вара Сукмановка тата Терновка ялсоветĕсен председателĕ пулса ĕçленĕ.

1931 çулти май уйăхĕнчен пуçласа С. Е. Белолипецкий ОГПУ—НКВД органĕсенче ĕçлеме пуçлать. 1932 çулччен кĕçĕн ĕçсенче, 1932 çултан пуçласа, вара паян кунченех ответлă тата ертсе пыракан тĕрлĕ должноçсенче ĕçлет. 1937 çулти октябрьтен пуçласа 1938 çулти август уйăхĕччен С. Е. Белолипецкий Воронеж облаçĕнчи НКВД Управленийĕнче ĕçленĕ. 1938 çулти август уйăхĕнчен пуçласа 1940 çулти сентябрь уйăхĕччен ССР Союзăн Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариатĕнче ĕçленĕ. 1940 çулти сентябрь уйăхĕнчен пуçласа вара — Чăваш АСС Республикин Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ.

ОГПУ—НКВД органĕсен ĕçĕнче вунă çула яхăн пулса, С. Е. Белолипецкий совет халăхĕн тăшманĕсемпе кĕрешес ĕçе, совета хирĕçле сылтăмлатроцкистла тата заговорла пысăк организацисене çĕмĕрсе тăкас ĕçе хастарлăн хутшăнса ĕçленĕ. СССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн тата вырăнти совет органĕсем панă наградăсем çавна лайăх çирĕплетсе параççĕ.

С. Е. Белолипецкий Ленин—Сталин партийĕн воспитанникĕ, вăл 1932 çулти октябрь уйăхĕнчен пуçласа ВКП(б) членĕнче тăрать.

Белолипецкий юлташ хăйĕн пĕтĕм вăйне, пĕлӳĕхне тата пултарулăхне совет халăх ĕçĕшĕн, коммунистсен парти ĕçĕшĕн, пирĕн чечекленекен çĕршывăн вăй-хăватне татах та вăйлатас ĕçшĕн парать. Вăл Ленин—Сталин партийĕн шанчăклă ывăлĕ.

И. М. Чарыков юлташшăн сасăлатпăр

СĔНТĔР. Шатракасси ялĕнчи колхозниксемпе единоличниксен пĕрлехи пухăвĕнче Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнчи рабочисем, служащисем тата инженерно-технически работниксем Шупашкар суйлав округĕнчи мĕнпур суйлавçăсене чĕнсе каланине сӳтсе-явса, ку чĕнĕве ырларĕç. Суйлавçăсем кăçалхи февралĕн 16-мĕшĕнче пурте хăйсен сасĕсене партин шанчăклă ывăлĕмĕн — Иван Матвеевич Чарыков юлташшăн пама пулчĕç.

Ялсоветри агитаторсем халĕ суйлавçăсем хушшинче агитаци ĕçне сарса пыраççĕ.

С. НАЛИМОВ.

Куславкка районĕнчи „Динамо“ колхозри комсомолецсен пуçарăвĕ çинчен

ВЛКСМ Чăваш обкомĕн бюровĕ 1941 çулти январĕн 30-мĕшĕнче йышăннă постановлени

ВЛКСМ обкомĕн бюровĕ çакна палăртать: Куславкка районĕнчи «Динамо» колхозри комсомол организацийĕ çамрăксене колхоз производствинче кирлĕ специальноçсене вĕрентес ĕçе организацилесси çинчен Чăваш республикинчи мĕнпур комсомолецсене чĕнсе каланипе паха пуçару турĕ. Комсомол организацийĕ пуçарăвĕпе колхозра ялхуçалăхĕн сложнăй машинисене, электричествăна, токарь, плотник тата çĕвĕ ĕçĕсене, кирпĕч, черепица тата ытти производствăсене вĕренессине организацияленĕ.

ВЛКСМ обкомĕн бюровĕ «Динамо» колхозри комсомолецсен пуçарăвĕ колхозсен обществăллă хуçалăхне пур майсемпе те çирĕплетсе пырас çĕртепит те пысăк вырăн йышăнса тăрать, тесе шутлать.

ВЛКСМ обкомĕн бюровĕ çапла **йышăнать:**

1. Куславкка районĕнчи «Динамо» колхозри комсомол организацийĕ Чăваш республикинчи мĕнпур комсомолецсене, çамрăксене колхоз производствинче кирлĕ специальноçсене вĕрентес ĕçе организацилесси çинчен чĕнсе каланине ырлас.

2. ВЛКСМ мĕнпур райкомĕсене тата пуçламăш организацийĕсене Куславкка районĕнчи «Динамо» колхозри комсомол организацийĕ чĕнсе каланине (вăл 1941 çулти январĕн 30-мĕшĕнче тухнă «Чăваш Коммуни» тата «Çамрăк большевик» хаçатсенче пичетленнĕ) комсомолецсен уçă пухăвĕсенче сӳтсе-явма хушас. Комсомол организацисенче комсомолецсене ремесло ĕçне — тимĕрçе, токарь, çĕвĕ ĕçĕсене, пылхурчĕ ĕрчетес ĕçе т .ыт. вĕрентессине организацилемелле.

3. «Çамрăк большевик» хаçат редакцине колхоз çамрăкĕсене специальноçсене вĕрентес ĕçе организацилес тĕлĕшпе комсомол организацисем мĕнле ĕçленине тăтăшах çутатса пыма хушас.

4. ВЛКСМ райкомĕсене çак постановлението райкомсен бюровĕсенче сӳтсе-явса, «Динамо» колхозри комсомолецсен пуçарăвне республикăри пур колхозсенче те анлăн сарса пымалла тăвас тĕлĕшпе мерăсем йышăнма хушас.

ВЛКСМ обкомĕн секретарĕ
Д. ПАРОЯТНИКОВ.

Обязательствăсене срокчен пурнăçа кĕртеççĕ

КАНАШ. **(Хамăр корр.).** Партин XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăрту кунран кун паха результатсем парать. Вагонсем юсакан заводра чылай сменăсем, бригадăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе хăйсен обязательствисене срокчен пурнăçа кĕртеççĕ. Ремонтнăй цехри пĕрремĕш смена январьти плана 110 процент тултарма пулнă. Январĕн 27-мĕш тĕлне 150 процент тултарнă. Çавăн пекех 2-мĕш смена та уйăхри плана срокчен тултарнă. Кунта тимĕрçсем Фомин, Щукин, молотобоецсем Шаргаев тата ытти юлташсем пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ.

Кузнечнăй цехри мастер Дементьев юлташ ертсе пыракан смена кулленех плана иртерсе тултарать. Вагонсем юсакан цехри В. Михайлов, вагонсем тăвакан цехри Алексеев юлташсен групписем лайăх ĕçлеççĕ. Заводри цехсенчи икĕ-виçĕ норма тултаракансен хисепĕ ӳссех пырать.

Словаки парламенчĕ Совет Союзĕпе Словаки хушшинчи суту-илӳ договорне ратификациленĕ

БРАТИСЛАВА, январĕн 29-мĕш. (ТАСС). Словаки парламенчĕ Совет Союзĕпе Словаки хушшинче суту-илӳ тăвассипе суднăсем çӳретесси çинчен тунă договора ратификациленĕ.

Совет Союзĕпе Словаки хушшинче суту-илӳ тăвассипе суднăсем çӳретесси çинчен тунă договора ратификациленĕ

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ ССР Союзĕпе Словаки хушшинче суту-илӳ тăвассипе суднăсем çӳретесси çинчен 1940 çулти декабрĕн 6-мĕшĕнче тунă договора радификациленĕ.

Стена хаçат редакторĕсемпе рабселькорсен семинарĕ

СĔНТĔР. Çак кунсенче колхозсенчи стена хаçат редакторĕсемпе рабселькорсен семинарĕ пулса иртрĕ. Унта стена хаçачĕсене умĕнче тăракан задачăсем çинчен сӳтсе-явăрĕç.

Семинарта стена хаçат редакторĕсемпе рабселькорсем колхозсенче стена хаçачĕсене вăхăтра кăларса тăма, хаçатсен пахалăхне лайăхлатма пулчĕç.

С. Налимов.

Февралĕн 2-мĕшĕнче—комсомолецсен йĕлтĕрлĕ кросĕ пуçланать

ВЛКСМ Центральный Комитетĕнче

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомолецсен Хĕрлĕ Çар XXIII çул тултарнă ятпа пулмалли йĕлтĕрлĕ кросне хатĕрленес ĕçри ыйтусене сӳтсе-явнă. Январĕн 24-мĕш тĕлне 760.000 комсомолец ГТО комплексĕн нормисене панă. Нормăсем парас тĕлĕшпе комсомолецсем халĕ те ĕçлеççĕ, тренировкăллă занятисем ирттереççĕ.

Комсомолăн чылай организацийĕсем ыйтнине шута илсе, ВЛКСМ Центральный Комитечĕ ФЗО шкулĕсенче, ремесленнăй училищисемпе чугунçул училищисенче вĕренекенсене комсомолра тăманнисене те кроса хутшăнма ирĕк панă.

Вырăнтан ыйтса янине кура ВЛКСМ Центральный Комитечĕ çапла ăнлантарса панă: комсомолăн пĕчĕк йышлă организацийĕсенче тăвакан командăсен составĕнче 5 çынран сахалрах пулма та пултарать.

Комсомолăн чылай организацийĕсем (Белорусси, Украина, Алтай организацисем тата ытти тĕсем те) ГТО комплексĕн йĕлтĕрлĕ е çуранлă нормисене паман комсомолецсене кроса хутшăнма ирĕк памашкăн сĕннĕ, ВЛКСМ Центральный Комитечĕ çав сĕнĕве йышăннă. Вĕсем нормăсене панине кроса хутшăннин результачĕсем тăрăх шута илеççĕ. (ТАСС).

Йĕлтĕрçĕсен кросне хутшăнма хатĕр

СĔНТĔР. Районри «Çĕнĕ юнга», Киров ячĕпе тăракан, «Свобода», «Заря» колхозсенчи комсомол пуçламăш организацисем комсомолецсен кросне лайăх хатĕрленсе кĕтсе илеççĕ.

Киров ячĕпе тăракан колхозра 7 команда организацияленĕ. Кроса хатĕрленсе пынă май унта ГТО значокĕн хĕллехи нормисене 13 çын панă. Комсомол пуçламăш организацин секретарĕ Пайманов юлташ аван ĕçлет.

Чылай организацисенче йĕлтĕрлĕ тата çурран походсем ирттерчĕç. «1-ое Мая» тата «Красный Октябрь» колхозсенче ирттернĕ походра 35 çын пулчĕç.

Г. Данилов

* * *

КУКЕÇ. Иккасси ялсоветне кĕрекен «1-ое Мая» колхозри комсомолецсем 40 километрлă похода кайса килчĕç. Похода Тимкин юлташ ертсе пычĕ.

Г. ПРОКОПЬЕВ.

МАРКСИЗМ-ЛЕНИНИЗМА ВĔРЕНЕКЕНСЕНЕ ПУЛĂШМА

Сталин юлташ ССР Союзĕнчи аграрнăй политика ыйтăвĕсем пирки калана сăмах çинчен

1929 çул пирĕн революцин историне аслă улшăну çулталăкĕ пулса кĕчĕ ССР Союзĕнчи рабочи класс ВКП(б) ертсе пынипе çав çул тĕлне тунă пысăк çитĕнӳсенчен пĕри—колхоз движенийĕ пит те анлăн сарăлса кайни пулнă. «Хальхи вăхăтра,—тесе калана Сталин юлташ,—колхоз движенинче çĕнни тата ĕçе татса параканни вăл—хресченсем колхозсене халиччен пулнă пек уйрăм ушкăнсемпе мар, пĕтĕм ялĕпе, пĕтĕм вулăсĕпе, пĕтĕм районĕпе пĕтĕм округĕпех те кĕнинче пулса тăрать... Çакă вăл **колхозсене вăтам хресчен кĕнине** пĕлтерет» («Ленинизм ыйтăвĕсем», чăвашла изд., стр. 264).

Колхозсемпе совхозсем ӳснипе, 1929 çул вĕçĕ тĕлне, кулаксен эксплоататорла туртăмĕсене пӳлсе пырас политикăран çĕнĕ политика çине—талккишпех коллективизациленĕ никĕс çинче кулаксене класĕпех пĕтерес политика çине куçма условисем пулса тăнă. Совет власĕн политикинчи çак çаврăнăва хакласа, «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕнче» çапла каланă: «Çакă вăл пит те пысăк революциллĕ переворот пулнă, обществăн кивĕ качествăллă состоянинчен çĕнĕ качествăллă состояние сиксе кӳчни пулнă, çак сикĕм кăйăн результачĕсемпе 1917 çулти Октябрьти революциллĕ переворотпа пĕр пекех пысăк вырăнта тăнă» (чăвашла изд., стр. 372).

Яла социализмла урăхлатса çĕнетес ĕçре çакăн пек çитĕнӳсем пулнă май теори фронтĕнчи работниксем умне çĕнĕ задачăсем тухса тăнă, çав задачăсене çийĕнчех татса пани кирлĕ пулнă. «Çĕнĕ практика капитализмран социализма куçас тапхăрти экономика проблемисем çине çĕнĕлле пăхассине çуратса кăларать. Нэп çинчен, классем çинчен, строительство хăвăртлăхĕсем çинчен, парти политики çинчен калакан ыйтусем халĕ çĕнĕлле тухса тăраççĕ» (Сталин,—«Ленинизм ыйтăвĕсем», чăвашла изд., стр. 268). Çакăн пек мĕнпур теориллĕ ыйтусене татса пани социализм строительствине ертсе пыма тата колхоз движенине хирĕç пынă буржуаллă теорисене тĕппех пĕтерсе хума кирлĕ пулнă.

Пирĕн умма çĕнĕлле тухса тăнă теориллĕ ыйтусене сӳтсе-явма аграрник-марксистсен конференцине пухнă. Вĕсен конференцийĕ Мускавра, 1929 çулти декабрĕн 20—27-мĕшсенче ĕçленĕ. Çак конференцире ĕнтĕ Сталин юлташ аграрнăй политика ыйтăвĕсем пирки сăмах тухса каланă.

Теорипе практика пĕр-пĕринчен уйăрăлса тăни пулмалла мар, тесе вĕрентет ленинизм. Анчах çав вăхăтра пĕтĕм экономика тĕлĕшĕнчи тата уйрăмăнах ялхуçалăхĕ тĕлĕшĕнчи теориллĕ ĕçсем социализм строительствинчи практикăллă çитĕнӳсенчен кая юлни палăрнă. Теори практикăран уйăрăлса тăнине пĕтермесĕр колхоз движенине тĕрĕс ертсе пыма май килмен. Çавна тумасăр буржуаллă теорисене, Кондратьев, Литошенко, Вайнштейн, Чаянов пек буржуаллă теоретиксем тата партие хирĕçле троцкистла-зиновьевла тата бухаринла ушкăнсем сарнă контрреволюциллĕ теорисене пĕтерсе хума та май килмен. Буржуаллă теорисене аркатса тăкни, тесе кăтартса панă Сталин юлташ, класс тăшманĕсене хирĕç çĕнтерӳллĕн кĕрешме кирлĕ. Çавăнпа Сталин юлташ пирĕн теоретиксем умне марксистла-ленинла теорие малалла аталантарас тĕлĕшпе пысăк та паха задачăсем кăларса тăратнă: «...Теориллĕ ĕç практикăллă ĕç хыççăн ĕлкĕрсе пымалла кăна мар, унтан иртсе малта пымалла, пирĕн практиксене социализм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешес ĕçре хĕçпăллантарса пымалла» (çавăнтах, стр. 267).

Сталин юлташ çак конференцире марксизм-ленинизмшăн тăшманла теорисене аркатса тăкнă. Çавăн пек тăшманла теорисенчен пĕрийĕ «равновеси» теорийĕ пулнă,—ăна сылтăм лагерьти чылай çынсем (Бухарин т. ыт. те) сарса пынă.

«Равновеси» теорийĕшĕн тăракансем социализм вăл социализм тата капитализм кĕрешнĕ хушăра социализм çĕнтернипе мар, хуçалăхăн социализмлă тата капитализмлă элеменчĕсем мирлĕн аталанса пынипе пулса тăрать, тесе шутланă. Патша Российĕнче промышленность продукцийĕ пĕчĕк вырăн, ялхуçалăх продукцийĕ пысăк вырăн йышăнса тăнă; патша Российĕ кая юлнă ялхуçалăхлĕ çĕршыв пулнă, ун чухне ялхуçалăхĕнче кулаксен хуçалăхĕсем пуçпулса тăнă. «Равновеси» теорийĕшĕн тăракансем вара Совет Союзĕн халăх хуçалăхĕ те патша Российĕнчи пекех пултăр, тесе сĕннĕ. Çапла ĕнтĕ сылтăм лагерьти тăшмансем, «равновеси» теорийĕпе витĕнсе, ССР Союзне техникăпа экономика тĕлĕшĕнчен кая юлнипех хăварассишĕн, капитализмлă элементсене пĕрмаях ӳстерсе пыр-ассишĕн кĕрешнĕ. Çавăнпа та Сталин юлташ «равновеси» теорийĕ çинчен: «Ку теорипе ленинизм хушшинче пĕрлехи нимĕн те çуккине ăнланса илме пывăрах мар. Çак теори уйрăм хресченсен хуçалăхĕсен позицине çаплипех хăварас, кулакла элементсен аллине колхозсене хирĕç кĕрешме «çĕнĕ» теориллĕ хĕçпăшал парас тата колхозсен позицине варалас тĕллеве лартнине ăнланса илме йывăрах мар» (çавăнтах, стр. 269), тесе каланă.

Политика тĕлĕшĕнчен «равновеси» теорийĕ классем хушшинче мир тума ĕннĕ. «Равновеси» теорине хӳтлекенем: социализмлă сектор тата капитализмлă сектор «икĕ тĕрлĕ çул çинче ăрса, пĕр-пĕрне тĕртĕнмесĕрех, маталла мирлĕн шуса пырасçĕ», вĕсем ĕрлешсен вара, пирĕн патра социализм пулса тăрать, тесе шухăшланă. Пирĕн парти ĕç çине пачах урăхла тăхнă: çĕршыва индустриализацилесси, ялхуçалăхне коллективизацилесси класс кĕрешĕвĕ çивĕч пулнă условисенче пулса пырĕ, хаяр класс кĕрешĕвĕнче капитализмлă элементсене тĕп туталла, тенĕ.

Çапла «равновеси» теорийĕ пирĕн партин политикине хирĕç тăнă. Парти, Ленинпа Сталин кăтартса пани тăрăх çлесе, хамăрăн çĕршыва хăватлă индустриллĕ çĕршыв тăвас тата колхоз движенине аталантарас политикăна урăçа кĕртсе пынă, çĕршывăн промышленноçĕ кăна мар, ялхуçалăхĕ те социализмлă хуçалăх пултăр, тесе тăнăшнă.

Марксăн аслăланса пыракан воспроизводство теорийĕ çине таянса, Сталин юлташ «равновеси» теорине арпăсĕрпе пекех аркатса тăкнă. Марксăн воспроизводство теорийĕ тăрăх, тесе каланă Сталин юлташ, «...хальхи вăхăтри общество çултан çул накоплени туса пымасăр аталанма пултараймасть...» (çавăнтах, стр. 269). Накоплени туса пыма çултан çулах ытларах продукци туса кăларни, урăхла каласан, аслăланса пыракан воспроизводство принципĕ тăрăх аталанса пыни кирлĕ. Пирĕн промышленность ун чухнехи вăхăтрах çуллен çул накоплени туса, аслăланса пыракан воспроизводство принципĕ тăрăх аталанса пынă. Анчах ун чухнехи вăхăтра ялхуçалăхĕ, уйрăм хресченсен вак хуçалăхĕсем, час-часах ахаль воспроизводство принципĕ тăрăх та аталанса пырайман, урăхла каланă, ялхуçалăхĕн продукци хисепĕ пĕр ниçĕре тытăнса тăма та пултарайман. Ялхуçалăхĕ çавăн пек пулни хамăрăн промышленноçа хăвăрт аталантарса пырассине хăрушлăх кӳрсе тăнă, мĕнпĕн тесен вакхресченлĕ кая юлнă ялхуçалăхĕ ӳссех пыракан промышленность валли чĕртавар çителĕклĕ парса тăма тата унăн продукцине илсе тăма пултарайман. Промышленноçпа ялхуçалăхĕ хушшинчи çавăн пек уйрăмлăха сирмесен: «Çакă вăл хăçан та пулин пĕтĕм халăх хуçалăхĕ йăлтах ишĕлсе каннипе пĕтмелле» (çавăнтах, стр. 269), тесе каланă Сталин юлташ. Ялхуçалăхне шултралатни кирлĕ пулнă, шултралатсан тин вăл аслăланса пыракан воспроизводство принципĕ тăрăх аталанса, çулленех накоплени туса пыракан пулса тăма пултарнă.

Марксăн аслăланса пыракан воспроизводство теорийĕнчен пирĕн çĕршыва индустриализацилессине пысăк хăвăртлăхпа туса пыни тата ялхуçалăхне шултралатни кирли тухса тăнă; хамăрăн çĕршыва хăвăрт индустриализацилени ялхуçалăхне реконструкцилеме май панă.

Ялхуçалăхне шултралатмалли икĕ çул пур: капитализмлă çул тата социализмлă çул. Революцичченхи вăхăтра Россия ялхуçалăхĕ, ытти капитализмлă çĕршывсен ялхуçалăхĕ пекех, капитализмлă çулпа пынă. Ун чухне миллионшар хресченсем нименсĕр тăрса юлнă, çурмапролетарие тата пролетарие тухнă. Паллах ĕнтĕ, кун пек çул пирĕнтен юрăхсăр çул пулнă. Совет Союзĕнчи ялхуçалăхĕ социализмлă çулпа аталанса пыни кирлĕ пулнă. Çак çулпа пырасси,—капитализмлă элементсене хирĕç хаяр класс кĕрешĕвĕнче колхозсемпе совхозсене сарса пырасси пулнă.

Марксăн аслăланса пыракан воспроизводство теорийĕ Совет Союзĕн ялхуçалăхĕ тĕлĕшпе — совхозсем тăвассин, хресченсен уйрăм вак хуçалăхĕсене колхозсене пĕрлештересси, класс кĕрешĕвĕнче капитализмлă элементсене çĕнтерсе пырассин, талккишпех коллективизацилеменĕ никĕс çинче кулаксене класĕпех пĕтересси теорийĕ пулса тăрать. Ку вăл—«равновеси» теорине пĕтерсе хуракан теори. Çавăнпа Сталин юлташ çапла калать: «Çак теорирен нимĕнле йĕр те ан юлтăр тесе, векторсен «равновесийĕ» çинчен калакан теорие хирĕç Марксăн воспроизводство теорине тăратни кăна кирлĕ çулчĕ» (çавăнтах, стр. 270).

Пирĕн çĕршывра çӳренĕ буржуаллă гепĕр теори—социализм строительствинчи «самотек» теорийĕ пулнă. «Самотек» теорийĕ майлă тăракансем, капитализм чухне ялхуçалăхĕ капитализмлă хула хыççăн стихийлăн аталанса пынă пек, пирĕн çĕршывăн ялхуçалăхĕ те хăй тĕллĕнех (самотек тăрăх) социализмлă промышленность хыççăн аталанса пырĕ, таварлă хуçалăхран социализмлă хуçалăх пулса тăрĕ, тесе шутланă. Чăн, капитализм чухне ялхуçалăхĕ самотек тăрăхах капитализмлă промышленность хыççăн аталанса пырать. Мĕнрен килет-ха ку вăл? Вăл капитализм чухне промышленность та, ялхуçалăхĕ те **пĕр типлă хуçалăх** пуллинчен килет, вĕсен никĕсĕ—производство средствисен уйрăм çынсен харпăрлăхĕ пулса тăни. Капитализм чухне промышленноçпа ялхуçалăхĕ пĕр типлă хуçалăх пулнă пирки, вĕсен никĕсĕ пĕрех пулнă пирки «вак производство капитализма яланах, кашни сехетрех, стихийлăн тата массăллăн çуратса тăрать» (Ленин).

Анчах хресченсен вактаварлă уйрăм хуçалăхĕсен никĕсĕ социализмлă промышленноçăн никĕсĕпе пĕр пек пулман: хресченсен вактаварлă хуçалăхĕсен никĕсĕ—уйрăм харпăрлăх пулнă. социализмлă промышленноçăн никĕсĕ—производство средствисен социализмлă харпăрлăхĕ. Çавăнпа ĕнтĕ ялхуçалăхĕ самотек йĕркипех социализмлă промышленность хыççăн пыни пулма пултарайман. Ана (яла, ялхуçалăхне) пролетариат ертсе пыни, ВКП(б) ертсе пыни кирлĕ пулнă тата халĕ те кирлĕ.

Социализм строительствинчи «самотек» теорийĕ—яла пролетариат ертсе пырассине хирĕç тăнă, вăл пролетариата ялхуçалăхне социализма урăхлатса çĕнетес задачăран пăрăнтармалли теори пулнă. Çавăнпа ĕнтĕ Сталин юлташ «самотек» теорийĕ çинчен—«Колхозсене хирĕç кĕрешме ялти капиталистла элементсем аллине çĕнĕ хĕçпăшал парас тĕллев лартакан теори... çĕрĕк теори, ленинизма хирĕçле теори пулса тăрать», тесе каланă. Çапла Сталин юлташ, марксистла-ленинла вĕрентӳ тăрăх, социализм строительствинчи «самотек» теорине—вăл буржуаллă теори пулса тăнине—тăрă шыв çине кăларнă, ялхуçалăхне пролетариат ертсе пыни кирлине кăтартса панă.

Вакхресченлĕ хуçалăхăн **«çирĕплĕхĕ»** çинчен калакан теори те пит сиенлĕскер пулнă.

II-мĕш Интернационалри ревизионистсем (Давид, Герц, Фольмар, Отто Бауэр т. ыт. те), марксизма хирĕç кĕрешсе, Карл Маркс шултра производство вак производствăран маларах тăни çинчен калани ялхуçалăх тĕлĕшпе выраннă мар, ялхуçалăхĕ хăйĕн ăрасна законĕсем тăрăх аталанса пырать, тесе каланă. Вырăссен «легальнăй марксисчĕсем» те çавăн пекех шухăшланă. Пирĕн çĕршывра çав теорие сараканнисем Чаянов, Челинцев т. ыт. пек профессорсем пулнă.

Пирĕн çĕршывăн пурнăçĕ вакхресченлĕ хуçалăхăн «çирĕплĕхĕ», çинчен калакан теорие аркатса тăкрĕ. Колхозсемпе совхозсем хресченсене шултра хуçалăх вак хуçалăхран малти вырăнта тăнине кăтартса ĕнентерчĕç. Çакна пурнăçа кĕртме пирĕн çĕршывра çĕре национализацилени май пачĕ,—çĕре национализациленипе çĕрĕн абсолютнăй рентине (çĕр хуçисем ĕçлемесĕрех доход илсе тăнине), ялхуçалăхĕнчи производительнăй вăйсем аталанассине чарса тăнăскере, пĕтерсе хунă. Пирĕн пролетариллĕ государство хăй ялхуçалăхĕнче шултра предприятисем—совхозсем—организацилет тата хресченсене колхозсем организацилес, колхозсене çирĕплетес ĕçре пысăк пулăшу парса тăрать. Çĕре национализациленĕ чухне пирĕн парти Маркспа Ленинăн çĕрĕн ренти çинчен калакан теорине асра тытса ĕçлесе пынă,—ССР Союзĕнчи социализм строительствин практики çак теори пĕтĕмпех тĕрĕссине кăтартса пачĕ. Капитализма çирĕплетес тĕллевпе вакхресченлĕ хуçалăхăн «çирĕплĕхĕ» çинчен каланă теорие пĕтĕмпех аркатса тăкнă.

Пирĕн колхозсем хăйсем вак хуçалăхран малти вырăнта тăнине машинно-тракторнăй станцисенчен пулăшу илнĕ май тата ытларах кăтартса парĕç, тесе каланă Сталин юлташ. Вăл малашнехине курса çапла калани пĕтĕмпех тĕрĕс тухрĕ. Хальхи вăхăтра пирĕн колхозсен уйхирĕсенче çĕршер пин тракторсем тата комбайнсем ĕçлеççĕ. Ялхуçалăхĕнчи ĕç—индустриллĕ ĕçĕн пĕр тĕслĕхĕ пулса пырать. Колхозсем социализмлă ялхуçалăхăн производительнăй вăйĕсене çавтери ӳстерсе ячĕç, производительнăй вăйсем кун пек ӳснине уйрăм хресченсен вак хуçалăхĕсем те, капитализмлă шултра фермăсем те нихăçан та курма пултарайман. Колхозлă ялăн культурлă сăнсăпачĕ те ĕлĕкхипе танлаштарма та çук улшăнчĕ.

Социализмлă ялхуçалăхăн, пирĕн колхозниксен çавтери пысăк çитĕнĕвĕсене куратăн та, иртнĕ вăхăтра халăх тăшманĕсем социализм строительствине хирĕç сарнă элекĕн ирсĕрлĕхĕ пушшех те уççăн курăнать. Пирĕн республикăра та буржуаллă националистсем, çав хаяр тăшмансем, кулаксен хутне кĕрсе, каллех капитализм туса хурас тесе, колхоз строительствине хирĕç урса кайсах кĕрешнĕ. Совет халăхĕ, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, халăх тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкрĕ. Совет çĕршывĕнчи мĕнпур ĕçсыннисемпе пĕрле, пирĕн Чăваш республикинчи ĕçхресченĕсем те Октябрьти социализмлă революцие пула тата колхозсем тунипе пуян та культурăлă, телейлĕ пурнăç çулĕ çине тухрĕç.

Троцкистла-бухаринла бандитсем, совет халăхне вилеслех курайманнипе, социализма курайманнипе тата социализм çĕнтерĕвĕсенчен хăранипе, колхозсем çинчен—вĕсем социализмлă ялхуçалăх мар тесе, элекленĕ. Çакăн пек элекле вĕсем колхоз стройĕ çĕнтересине сирме шутланă. Сталин юлташ çийĕн сăмахĕнче тăшмансен çав ирсĕр ӳмĕтне тăрă шыв çине кăларчĕ, колхозсем социализмлă хуçалăх формисенчен пĕри пулса тăнине кăтартса пачĕ. Колхозсенче—производство средствисем тата пĕрлештернĕ мĕнпур пурлăх коллективлă, социализмлă харпăрлăх; колхозсенче—çынна çын эксплоатацилени çук; колхозсенче—кашниех хăй пултарнă таран ĕçлеме тивĕçлĕ тата кашниех мĕн чухлĕ ĕçленине тата ĕçĕн пахалăхне кура илет. Кун пек социализмлă хуçалăхра кăна пулма пултарать. Колхозсем социализмлă хуçалăх форми пулса тăни çинчен ССР Союзĕн Сталинла Конституцийĕн 7-мĕш статьинче татăклăн каланă.

Колхозсенчи класлă кĕрешӳ çинчен кăшкăрашнă «сулахай» карма-çăварсем те марксистла-ленинла вĕрентĕве пăснă. Парти ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăракан çак ыйтăва та Сталин юлташ татса панă. Вăл çапла кăтартса панă: колхозсенче çынна çын эксплоатацилени çук, çавăнпа кунта колхоз тулашĕнчи пек класс кĕрешĕвĕ те çук. Колхозсенче, колхозниксен ăстăнĕнче вакбуржуаллă психологи юлашкийĕсем пур пирки тата халлĕхе хăшпĕр танмарлăх пур пирки, класлă кĕрешĕвĕн элеменчĕсем пур. Çавăнтах Сталин юлташ колхозниксене воспитани парас тĕлĕшпе ĕçлеме кирлине кăтартса панă. Ку кăтарту цаян кунтан та пит те кирлĕ, мĕншĕн тесен харпăрхăйĕн интересне общественăллă интерессенчен мала хуракансемпе, кахалланакансемпе, спекуляци тăвакансемпе кĕрешесси, кашни колхозник колхозри ĕçсене, государство умĕнчи обязательствăсене гӳрĕ кăмăлпа, вăхăтра пурнăçа кĕртелле тăвассишĕн кĕрешесси — социализмлă общество туса ситерес тата пайĕпен социализмран коммунизм патне куçас задачăна пурнăçа кĕртме кирлĕ.

Сталин юлташ хăйĕн сăмахĕнче, юлашкинчен, парти кулаксен эксплоататорла туртăмĕсене **пӳлсе пырас** политикăран **кулаксене класĕпех пĕтерес** политика çине куçнине никĕсленĕ. 1929 çуллăн эпир кулаксене класĕпех пĕтерме пултарайман, мĕншĕн тесен кулаксен тырă производствине улăштармалли пирĕн пулман. 1929 çул тĕлне, совхозсемпе колхозсен строительствин ăнăçлă пулса пынипе, кулаксен тырă производствине совхозсемпе колхозсен производствине улăштарма май пулса тăчĕ. Талккишпех коллективизацилеменĕ никĕс çинче кулаксене класĕпех пĕтернĕ май, колхоз движенийĕ татах та пысăкрах хăвăртлăхпа ӳссе пычĕ, хуçалăхăн социализмлă системи ялхуçалăхĕнчи пĕртен-пĕр система пулса тăчĕ.

Сталин юлташан сăмахĕ марксизм-ленинизма творчествăлла аталантарнин примерĕ пулса тăрать. Унăн çак сăмахĕ пире марксизм-ленинизмшăн тăшманла теорисене мĕнле тăрă шыв çине кăларса çĕмĕрсе тăкмаллине вĕрентет. Сталин юлташăн сăмахĕ марксизм-ленинизм ялхуçалăхне социализмла урăхлатса çĕнетесси çинчен вĕрентни çумне хушнă хаклăран та хаклă вклад пулса тăрать.

Я. ЖЕЛЕЗНОВ.

Латви ССР Республикин столици Рига хули. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: вокзал площачĕ.
Д. Чернов фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС).

1940 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсене наградăлани

Ялхуçалăхĕнче ĕçĕн чи лайăх образецĕсене кăтартнăшăн, Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин Главнăй Комитечĕ 1941 çулти январĕн 3-мĕшĕнче йышăннă постановленипе пирĕн Чăваш республикинчен колхозсен председательĕсене, машинно-тракторнăй станцисемпе совхозсен директорĕсене, специалистсене, ялхуçалăхĕнче малта пыракансене тата ялхуçалăх организаторĕсене çак юлташсене наградăланă:

Пĕчĕк ылттăн медальпе

1. **Василий Павлович Данилов**—Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Атнар ялсоветĕнчи «Красное Сормово» колхоз председательĕ.

2. **Мария Яковлевна Додонова**—Улатăр районĕнчи Стемас ялсоветĕнчи «Путь Ильича» колхозри звеньевой. Вăл 1938—1939 çулсенче вăтам шутпа гектартан 32,83 центнер махорка туса илнĕ. Вăл шутра рекордлă участок çинче гектартан 63,5 центнер туса илнĕ. Малтан ăна Пĕчĕк кĕмĕл медаль парса наградăланă.

3. **Иван Тимофеевич Рыбаков**—Куславкка районĕнчи Аманикри «Динамо» колхоз председательĕ.

4. **Михаил Федорович Скворцов** — Çĕрпӳ районĕнчи Анатри Кипекçе ялсоветĕнчи «Емĕт» колхоз председательĕ.

Пысăк кĕмĕл медальпе

1. **Иван Дмитриевич Замахов**—Кувакино районĕнчи Кладбищи ялсоветĕнчи «12 лет Октября» колхозри садовод. Вăл 1938—1939 çулсенче çамрăк садпахчинчи йывăççене 98,25 процент упраса хăварса ӳстернĕ.

2. **Герасим Иванович Иванов** — Октябрьский районри çав ялсоветнех кĕрекен «Красная Чувашия» колхоз бригадирĕ. Вăл 1937—1939 çулсенче вăтам шутпа гектартан 6,83 центнер хăмла туса илнĕ.

3. **Леонид Дмитриевич Иливанов** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи райçĕрĕç пайĕн старший зоотехникĕ.

4. **Степан Платонович Платонов** — Тăвай районĕнчи Еншик-Нăрваш ялсоветĕнчи «Красная Чувашия» колхозри звеньевой. Вăл 1938—1939 çулсенче вăтам шутпа гектартан «Виктория» пăрçана 25,8 центнер туса илнĕ.

5. **Евдокия Петровна Федорова**—Тăвай районĕнчи Тăрмăш ялсоветĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозри звеньевой. Вăл 1938—1939 çулсенче вăтам шутпа гектартан 27,05 центнер кĕрхи çыраш туса илнĕ.

6. **Павел Иванович Ягушев** — Ишлей районĕнчи райçĕрĕç пайĕн старший гидротехникĕ.

7. **Николай Исакович Яковлев**—Йĕпреç МТ Станцинчи бригадир. Вăл 1938—1939 çулсенче хăйĕн бригадинчи кашни СТЗ трактор пуçне 1.020 гектар ĕçленĕ.

Пĕчĕк кĕмĕл медальпе

1. **Севастьян Филиппович Агеев** — Куславкка районĕнчи Аманик ялсовет председательĕ.

2. **Сергей Петрович Багров**—Вăрнар районĕнчи Волонтер ялсоветĕнчи «Большевик» колхоз председательĕ.

3. **Иван Григорьевич Ванюков** — Çĕмĕрле районĕнчи Турхан ялсоветĕнчи «Комбинат» колхозри утар заведующийĕ.

4. **Василий Ильич Каримов**—Чкаловский МТ Станцинчи механик.

5. **Семен Сергеевич Корлин** — Елчĕк МТ Станцинчи трактор бригадин бригадирĕ. Унăн бригадинче кашни СТЗ трактор пуçне 984 гектар ĕçленĕ.

6. **Егор Михайлович Михайлов** — Тăвай районĕнчи Тăрмăш ялсоветне кĕрекен Мичурин ячĕпе тăракан колхоз бригадирĕ. Вăл 1938—1939 çулсенче вăтам шутпа гектартан ир пулакан купăста 350 центнер, помидор 320 центнер, хăяр 315,5 центнер туса илнĕ.

7. **Александр Ксенофонтович Самаков** — Советский районри Тойши ялсоветĕнчи Володарский ячĕпе тăракан колхозри ăратлă сысна фермин заведующийĕ.

8. **Екатерина Семеновна Семенова** — Сĕнтĕр районĕнчи Кашмашри «Свобода» колхозри звеньевой. Вăл 1938—1939 çулсенче вăтам шутпа гектартан средне-русский кантăрĕ: 12,5 центнер сӳс, 6,08 центнер кантăрвăрри туса илнĕ.

9. **Алексей Сергеевич Сергеев** — Çĕрпӳ районĕнчи Тĕнсĕрти «Чуваш. ЦИК» колхозри садовод. Вăл 1938—1939 çулсенче çамрăк садпахчинчи йывăççене 98 процент упраса хăварса вăтам шутпа 64 сантиметр ӳстернĕ.

10. **Анна Карповна Тюрина**—Кувакино районĕнчи Сур-Майдан ялсоветĕнчи «Ударник» колхозри звеньевой. Вăл 1938—1939 çулсенче вăтам шутпа гектартан 34,5 центнер махорка туса илнĕ.

11. **Василий Петрович Фомичев** — Етĕрне районĕнчи Засурскинчи лаша ĕрчетекен заводри конюх. Вăл 1938 çулта 10 кĕсререн 9 тиха, 1939 çулта 10 кĕсререн 10 тиха пăхса ӳстернĕ.

12. **Николай Иванович Чернов**—Шăхасан МТ Станцинчи тракторист. Вăл 1938—1939 çулсенче СТЗ тракторпа 612 гектар ĕçленĕ.

13. **Елена Ивановна Шмер** — Çĕрпӳ районĕнчи опытлă зоотехника станцинчи доярка. Вăл 1938—1939 çулсенче красногорбатовский йăх кашни ĕнерен 2857 литр сĕт суса илнĕ.

14. **Василий Николаевич Шаланков**—Вăрнар МТ Станцинчи тракторист. Вăл 1938—1939 çулсенче СТЗ тракторпа вăтамран 658 гектар ĕçленĕ.

Хутпĕлменлĕхе пĕтерес тата хутла сахал пĕлекенсене вĕрентес тĕлĕшпе пирĕн республика Мордва республикипе ăмăртăва тухрĕ

Çак кӳнсенче Шупашкара Мордва республикинчен хутпĕлменлĕхе пĕтерес тата хутла сахал пĕлекенсене вĕрентес тĕлĕшпе пирĕн республикăпа ăмăрту договорĕ тума ятарласа янă делегаци килнĕ. Делегаци составĕнче: Мордва АССР Наркомпросĕн çитĕннисене вĕрентес тĕлĕшпе ĕçлекен Управлени начальникĕ Шитканова, ВЛКСМ Мордва обкомĕнчен Кузнецова тата ВЛКСМ Мордва обкомĕн «Ленин çулĕне» хаçатăн ответлă редакторĕн заместителĕ Кономанин юлташсем.

Мордва республикин делегацийĕ пирĕн республикăра хут пĕлменнисене вĕрентес ĕç мĕнле пынипе паллашас тĕлĕшпе Шупашкар районĕнчи шкулсенче, ялсенче тата Шупашкар хулинчи шкулсенче пулнă. Унта пулнă хыççăн делегаци хутла пĕлменнисене вĕрентес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пурринех палăртрĕ.

— Шупашкар районĕнче хутла пĕлменнисем 103 çын шутланаççĕ. Вĕренĕве 41 çын кăна явăçтарнă. Хăшпĕр çĕрте хутла пĕлменнисене шута та илсе тухман. Вĕсене вĕрентме уйăрнă учительсемпе культармеецсем ĕçлемеççĕ. Райçутĕç пайĕ вырăнта ĕçсем мĕнле пынине тĕрĕслемест. Комсомол организацисем те çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Кунĕнчен обкомол та кирлĕ пек ĕçлеме тытăнман-ха,—тет Мордва республикинчен килнĕ Шитканова юлташ.

Делегаци пĕлтернĕ тăрăх, Шупашкар хулинче те ĕç çителĕксĕр пырать.

Январĕн 29-мĕшĕнче Чăваш АССР Наркомпросĕнче Мордва республикипе пирĕн республика хушшинче тунă ăмăрту договорне алă пусса çирĕплетрĕç.

Ăмăрту договорĕ тăрăх февраль уйăхĕнче республикипе хутла пĕлменнисене 11.000 çын, хутла сахал пĕлекенсене 10.000 çын вĕренĕве явăçтарма палăртнă. Вĕсене вĕрентме пурĕ 90 шкул уçмалла тата хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене хăйсен килĕсене çӳресе уйăмăн е группăсем туса вĕрентмелле. Ку ĕçе культармеецсене 6000 çын явăçтармалла. Культармеецсем пулса ĕçлеме учительсене, комсомолецсене, вăтам шкулта аслă классенче вĕренекенсене анлăн хутшăнтармалла.

Элĕк, Кувакино, Хĕрлĕ Чутай, Куславкка, Октябрьский, Сĕнтĕр, Вăрмар, Шупашкар, Елчĕк районĕнче тата Канаш хулинче хутла пĕлменнисене пурне те 1941 çулти июнĕн 1-мĕшне вĕрентсе кăлармалла. Çакăн пек тунипе асăннă районсене пĕтĕмпех хутла пĕлекен районсем туса çитерме пăхнă.

Кăçал призыва кĕмелли, 1922—23 çулсенче çуралнă, хутла пĕлмен тата сахал пĕлекен допризывниксене майăн 1-мĕш тĕлне вĕрентсе кăлармалла.

Хутла пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене лекцисем, докладсем, калаçусем, хаçат-журналсем вуласа парассине йĕркеллĕ ирттермелле. Вулав çурчĕсенче, библиотекăсенче, клубсенче çитĕннисен шкулĕнче вĕренекенсем валли кĕнекесем çителĕклĕ пулмалла, вĕсенче ятарласа кĕнеке полкисем организацилемелле.

Учительсемпе культармеецсене пулăшас тĕлĕшпе районсенчи педкабинетсенче методикăллă кăтартусем парассине йĕркелемелле тата çитĕннисен шкулĕсен ĕçри лайăх опычĕсемпе паллаштарма ятарласа выставкăсем организацилемелле.

Хутла пĕлменнисене вĕрентес ĕçе лайăх туса пыракансене премилеме Наркомпрос 10 пин тенкĕ укçа уйăрнă. Кунсăр пуçне хавхалантармалли урăх тĕрлĕ майсемпе те усă курмалла.

Ăмăрту договорне икĕ хутчен—кăçалхи июнь уйăхĕнче тата 1942 çулти январь уйăхĕнче тĕрĕслеççĕ.

Дисциплина та тасалăх— çавăнтан килет пахалăх

Кĕркунне
çăлтăрсем
туллиех тӳпере
Елĕк те,
халь те,
ĕмĕр-ĕмĕрех.
Анчах усси-сиппийĕ
çĕре
Пурпала çукпа пĕрех...
—Тек, çук,—
теме çук,—
çавнашкал этемсем
Сăмахĕсемпе
вĕсем —
такамсем,
темсем,
Анчах усси-сипийĕ
хăшĕсен
вĕсен:
Иртет-и пуху,
канашлу-и,
вечер-и—

Тухса каласа ун çук
Тӳсеймест чĕри,
Вăл илмест парсан
ĕçме,
çиме,
Тухса тумасан
итог-резюме!
Оратор...
ăна çитекенĕ сайра.
Пуçлать Китайран,
Пĕтерет санпа.
Шăлать
пуçран,
Сурать
куçран,
—Прогул,—тет,
—Иртмест,—тет,
—Каçмасть,—тет.—
тĕрмесĕр!
Анчах
тепĕр кун,
пухуран кайран,

Те
тем пĕлсе вăл,
Те
ним пĕлмесĕр,
Ĕçре
курăнмасть
тăххăр çурă
иртмесĕр.
—Культурăллăх,
Тасалăх
Хастарлăх,
Пахалăх—
Мĕн кăна çук пулĕ
ун чĕлхинче!
Анчах
цехĕнче,
шкулĕнче,
класĕнче—
Пачах урăхла тĕнче.
Тухатпăр эпир
кашни ир,
савăнса,
Ĕçе
тиркеместпĕр,
теместпĕр:
—Ку ирсĕр.
Анчах

Ĕç пымасть
ăннă çемĕн ăнса
Сатурсăр,
ăстасăр,
тасасăр,
режимсăр!
Çиç,
вĕç,
эс, ĕç!
Ĕçре —
савăнăç.
Камăн цехĕ таса—
Ĕç пырать яркаса.
Пурнăç—ăнăçăн
çук ершӳ.
Вăхăтăн
вăрăм
кĕтме вăхăт çук.
Васкать
çĕнĕ çул,
Васка,
çĕршыв!
Чăн-чăн кĕрешӳ,
Чăн-чăн çапăçу!

В. САВАÇ.

Финанс агенчĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Клавдия Ильинична Ильина финагент пулса Асанкасси ялсоветĕнче пĕр султалăк ĕçлет. Ялсовет малтанхи çулсенче укçа-тенкĕ пухас плана тултарас тĕлĕшпе кашни кварталтах юлса пынă. Ку ĕнтĕ ялсоветра ĕçлекен работниксем укçа-тенкĕ пухас ĕçе хакламаннинчен килнĕ. Вăл вăхăтра укçа-тенкĕ пухас ĕçе ялсоветри актива хутшăнтарман, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче массăллă-ăнлантарауллă ĕçе туса пыракан пулман.

Комсомолка Клавдия Ильина укçа-тенкĕ пухас ĕçе лайăхлатассине чи малтан массăпа ĕçленинчен тытăннă. Вăл укçа-тенкĕ пухас нăтăва комсомолецсен пухăвĕнче лартать. Комсомолецсем укçа-тенкĕ пухас ĕçре Ильина юлташа хапăл тусах пулăшма пуласçĕ. Колхоз председателĕ, вăлах райсовет депутачĕ, Архипов, туллимар вăтам шкул директорĕ Миронов, ялсовет председателĕ Таборкин тата Митюкова, Канташкина комсомолецсем укçа-тенкĕ пухас ĕçпе интересленме тытăнаççĕ, çамрăк финагента Ильина юлташа ĕçре пулăшса пыраççĕ. Ялсоветри ĕççыннисене вĕсем укçа-тенкĕ вăхăтра пухма кирли çинчен тĕплĕн ăнлантарса пама тытăнаççĕ. Финагент Ильина юлташ массăпа, ялсоветри активпа çавăн пек тачă сыхăнса ĕçленипе пысăк ӳсĕм тăвать. Асанкасси ялсовечĕ укçа-тенкĕ пухас плана кварталтан кварталрах тултарса пыма тытăнать. Ялсовет 1940 çулти виççĕмĕш кварталти плана 119 процент, тăваттăмĕш кварталти плана 133,5 процент, çулталăкри плана 100 проценчĕпех тултарнă.

Комсомолка Ильина юлташ 1940 çулта тунă çитĕнӳсемпе лăпланмасть. Вăл 1941 çулта татах та лайăхрах ĕçлессишĕн тăрăшать. Ялсовечĕн çак кунсенче пулнă 10-мĕш сессинче 1940 çулти ĕçĕн итогне тата малалли задачăсем çинчен сӳтсе-явăç. Сессинче Ильина юлташ «февралĕн 15-мĕшне—партконференци уçăлнă куна пирĕн укçа-тенкĕ пухас пĕрремĕш кварталти плана 75 процентран кая мар тултармалла», терĕ. Сессинче пулнă депутатсем пурте Ильина юлташăн сĕнĕвĕпе килĕшрĕç. Çак сессинчех Чăваш АССР Совмаркомĕ «Чăваш АСС Республикинчи ялсенче пурăнмалли çуртĕрсен тата культурăпа йăла строительстви валли 1941 çулта укçа-тенкĕ пухасси çинчен» йышăннă постановление тата самообложени çинчен сӳтсе-явăç. Сесси самообложенипе культсбор çинчен ĕççыннисене лайăх, тĕплĕн ăнлантарса парса, партконференци уçăлнă кун тĕлне 100 проценчĕпех пухса çитерме йышăнчĕ. Ĕççыннисем хушшинче массăллă-ăнлантарауллă ĕçе вăйлатнă май культсборпа самообложени укçине 1941 çулăн 100 проценчĕпех тӳлесе татнă колхозниксем те сахал мар. Ку ĕçре ялти актив хăй малтан пример кăтартрĕ. Сăмахран, Иван Ярышов, Федор Кондратьев, Василий Архипов, Александр Конташкин, Сергей Петров, Филипп Таборкин, Егор Петухов, Иван Волков тата ытти колхозниксем те 1941 çулăн культсборпа самообложени укçине пĕтĕмĕшпех парса татнă.

Кунта партипе комсомол организацийĕсем те укçа-тенкĕ пухас ĕçпе интересленеççĕ, финагент Ильина юлташа ĕçре куллен пулăшса пыраççĕ. Финанс активĕ ăмăртăва хутшăннă. Пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Миронов юлташ ялти актив хăй çине илнĕ обязательствăсене, ăмăрту договорĕсене мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе, кая юлакансене мала тухма пулăшса пырать.

М. ЯКОВЛЕВ.

Тырпул тухăçне ӳстерессишĕн кĕрешӳ сарăлса пырать

Тăпра кăпăш пултăр, тăпрара нӳрлĕх çителĕклĕ пултăр, тырпул ăнăçлă ӳстĕр, — çакăншăн тăрăшаççĕ Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем. Юр çума пуçласанах 52 гектар çĕр çине йывăç турачĕсем пăрахса, ыраш кĕлтисем тата ятарласа тунă щитсем лартса тухнă. Тăвайккиллĕрех выраçнче те тӳрем çĕртти пекех юр пухăнса, хулăмланса пырать.

Ытти тĕрлĕ ĕçсем те тырпул тухăçне ӳстерме пулăшаççĕ. Акă колхозра хĕрӳ ĕç пуçланчĕ. Выльăхсен витисенчен лавĕ-лавĕпе тислĕк тухать. Ку вăхăта çитсе 500 тонна ытла турттарса кăларнă. Пурĕ 1.400 тонна кăлармалла.

Ункă шывĕ хĕррипе улăх сарăлса выртать. Кунта ниçтинчен те нумайăн ĕçлеççĕ. Улăха иккĕ тĕлте ломсемпе шăтарса чавса пĕтернĕ. Лав хыççăн пав пырать торф тиеме. Питех те паха удобренине кĕреçесемпе чавса кăларса, çунасем çине тие-тие яраççĕ. Торф запасне пĕтĕмпех тĕпчесе пĕлнĕ теме çукха. Колхозниксем каланă тăрăх, икĕ гектар çинче 4—6 метр хулăмĕш торф запасĕ выртать.

— Вăл торфа пирĕн ĕмĕрте те усă курса пĕтерме çук, — теççĕ колхозниксем.

Планпа пăхнă тăрăх кăçал 800 тонна турттарса уя кăлармалла. Çак вăхăта çитсе 300 тонна ытла кăларнă.

— 5—6 çул хушшинче торф уссине лайăхах ăнланса илнĕ. Унпа пĕлсе усă курма вĕреннĕ.

— Ку торфа чипер майласа тăксан килес çул тулă вăйлă пулать ĕнтĕ, — тет торф турттарса тăракан колхозник Максимов.

Торфпа тислĕке сийĕн-сийĕн хурса пырса, уйра пысăк купасем туса лартаççĕ. Çуркуннечен торфпа тислĕк хутăшса çĕреççĕ. Питĕ паха компост пулать. Çакăн пек çĕртсе хатĕрленĕ компоста çуртри акас умĕн 21 гектар çине сапаласа тăкма йышăннă.

Колхозниксем ВКП(б) XVIII конференцийĕ уçăличчен çуракине пĕтĕмпех хатĕрленсе çитме пулнă. Вăрлăхсене сортласа хатĕрленĕ. Çак кунсенчех ялхуçалăх машинисене юсаса çитереççĕ. Плуг отвалĕсене кăçал пĕтĕмпех çĕнĕрен уламăртарса лартаççĕ. Пур тĕрлĕ машинăсем те конференци уçăлнă тĕле хатĕр пулаççĕ. Çакăншăн тăрăшаççĕ колхозниксем.

Кăçал кашни гектартан 14-шар центнер тĕштырă туса илме пулса Анатри Кипекçери «Емĕт» колхозпа социализмлă ăмăртăва тухнă. Иртнĕ çулта 12-шер центнер пухса илнĕ. Колхозниксем тырпул тăвас ĕçе хăнăхсах пыраççĕ. Агротехникăллă ĕçсене пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пыраççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ вĕсем 1941 çулта хăйсем умне лартнă задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртĕç.

Тĕштырăсем кăна мар, пур тĕрлĕ çимĕçсем те çителĕклĕ туса илессишĕн тăрăшаççĕ Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем. Виçĕ гектар çинче улмуççи сачĕ ӳсет. Улмуççисем силес çул çимĕç пама тытăнаççĕ. Тăхăр гектар çинче тĕрлĕ çимĕçсем ӳстерме палăртнă. Кăçал пуçласа пĕр гектар çине арбуз лартаççĕ. Пархиссем тума кĕркуннех 7 котлован чавса хатĕрленĕ, 20 рама илме заявка панă.

— Бригадирсемпе фермăсенче ĕçлекен работниксем агротехникăна вĕренме Кăшкаркассинче организацинелĕ стахановла шкула сӳреççĕ. Хамăр яла агроном килеймерĕ, çакна пула агрокружок организацилеймерĕмĕр. Уçасахчĕ вăл агрокружока, колхозниксем агротехникăна вĕренĕччĕç, — тет счетовод Дмитриев.

Суракине тĕплĕн хатĕрленнине лайăх туйса илетĕн. Урапа тенелĕсем, ӳстăрмасене тыттармалли тимĕрсем (шинасем) илсе хатĕрленĕ.

Сĕрпӳ. (Хамăр корр.).

Канашри вагонсем юсакан заводри стахановец-рессорщик И. Д. Петров юлташ ВКП(б) XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса кулленхи нормăна 230 процент тултарса ĕçлет. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: И. Д. Петров юлташ. К. Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ.

▲ ▲ ▲

Январь уйăхĕнчи плана тултарнă

Çĕмĕрлери катка-пичке тăвакан завод коллективĕ партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнса пысăк çитĕнӳ турĕ. Январь уйăхĕнче продукци туса кăлармалли плана январĕн 20-мĕшне 115 процент тултарчĕ. Уйрăм цехсем татах та лайăхрах ĕçлерĕç: корзинкăсем çыхакан цех хăйĕн планне 181 процент, обозсен цехĕ—154 процент тултарнă.

Заводри чылай стахановецсем ĕç тухăçлăхне халичченхинчен темиçе хут ытларах хăпартрĕç. Çĕмĕрле хула Совечĕн депутачĕ Л. Левин юлташ кулленхи нормăна 178 процент тултарать, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине илнĕ А. Бариновпа И. Грибов юлташсем те кăтартуллăн ĕçлеççĕ. Кулленхи нормăна А. Баринов юлташ 170 процент, П. Грибов юлташ 124 процент тултараççĕ. Пуринчен те лайăхрах А. Лянцевăпа А. Сутыркин юлташсем ĕçлеçĕ, вĕсем нормăна 180-шар процент тултараççĕ.

Хальхи вăхăтра завод коллективĕ сĕнĕ производствăна—йĕлтĕрсем туса кăларас ĕçе хăнăхса пырать. Январь уйăхĕнче пĕтĕмпе 300 мăшăр йĕлтĕр туса кăларнă.

П. М.

Телефонисткăсем Морзе аппарачĕпе ĕçлеме вĕренеççĕ

СССР Çыхăну Халăх Комиссариачĕ кăларнă приказ тăрăх çыхăну работникĕсен кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕччен Морзе аппарачĕпе ĕçлеме вĕренсе çитмелле.

Çак приказа пурнăçлассишĕн çыхăну работникĕсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Акă Ишлейри çыхăну уйрăмĕнчи Рима Иванова телефонисткăнах илер. Вăл икĕ çул каярах телефониста пулса ĕçлеме вĕреннĕ. Халĕ вăл производствăра уйрăлмасăрах Морзе аппарачĕпе ĕçлеме вĕренсе çитрĕ. Хăйсен специальноçĕсĕр пуçне иккĕмĕш специальность туянассишĕн—телеграфист пулассишĕн тăрăшса ытти телефонисткăсем те Иванова юлташран юласшăн мар. Ландышева телефонистка Морзе азбукине вĕренме тытăннă.

С. Горланов.

Пайланман фондпа тĕрĕс усă курмалла

Ялхуçалăх артель уставĕн 12-мĕш пунктĕнче кăтартнă тăрăх, кашни колхозрах пайланман фондсем тумалла. Вĕсем çулсеренех пысăкланса, ӳссех пымалла. Çакна пурнăçласа пырасси кашни колхоз правленин обязанноçĕ пулса тăрать.

Çĕмĕрле районĕнчи чылай колхозсем çак фонда ӳстерсо, унпа тĕрĕс усă кураççĕ. Вĕсем юлашки ик-виçĕ çул хушшинче кăна пайланман фонда темиçе вунтшар пин тенке çитерчĕç. Çав фондран хăйсене кирлĕ çуртйĕрсем туса лартрĕç, ялхуçалăх машинисем, выльăх-чĕрлĕхсем туянчĕç. Урăхла каласан, пайланман фонд колхозсене организацине хуçалăх енчен тĕреклетес тĕлĕшпе калама çук пысăк пулăшу пачĕ, пысăк пулăшу парать те.

«Красная звезда» колхоз (председателĕ Смородинов юлташ) пайланман фонда кашни çулах пысăклатса парать, унăн недоимка çук. Паянхи куна çав фонд 29.556 тенкĕ шутланать.

Колхоз организацине хуçалăх енчен тĕрекленсех пырать. Юлашки çулсенче кунта тырпул хума 2 амбар туса лартнă, сурăх, чăх-чĕп тата кролик фермисем организацилеленĕ, лашасем илнĕ. Иртнĕ çулта кăна колхоз пайланман фондран 11.469 тенкĕ расходланă.

— Пирĕн колхоз членĕсем пайланман фонд мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине лайăх ăнланса илнĕ. Çавăнпа вĕсем ăна çулсерен пысăклатса пыма пулăшаççĕ. Чăннипе каласан пĕтĕм пурлăх пирĕн çав фондран килет, ялхуçалăх машинисене те вăл шутранах туянатпăр,—çапла каласа параççĕ колхоз правленинче ĕçлекенсем.

«Самолет» колхоз (председателĕ Бахмутов юлташ) иртнĕ çулсенче кăна пайланман фонд шучĕпе 40 лаша вали вите тунă, кивĕ амбарсемпе сарайсене юсанă, сурăх тата чăх-чĕп фермисем организацинелĕ, 23 ĕне илнĕ. Паянхи куна унăн пайланман фондра 53.040 тенкĕ пур (1940 çулхи тупăшран ку фонда валли 16.093 тенкĕ уйăрнă).

Молгачкинори «Молодая сила» колхоз та ялхуçалăх артелĕн уставне тивĕçлĕн пурнăçа кĕртсе пырать. Вăл кашни çулах илнĕ тупăшран 12—15 процентне пайланман фонда уйăрса парать, недоимка çук. Çакăнпа пĕрлех фондпа тĕрĕс усă курать. Сăмахран, фонд укçипе питĕ аван пĕве турĕ, халĕ унта пулă ĕрчетеççĕ.

Анчах районра пайланман фондпа усă курма пĕлмен тата илекен тупăшран кирлĕ пек начислени туса пымав колхозсем те пур. Акă, хăшпĕр тĕслĕхсем. «Авангард» колхоз (председателĕ Кутузов юлташ) виççĕмĕш çул ĕнтĕ илнĕ тупăшран пайланман фонда кирлĕ пек укçа уйăрса памасть. 1938 çулта 898 тенкĕ, 1939 çулта 7941 тенкĕ парса татман. Чăнах та иртнĕ çулхи тупăшран вĕсем чылай уйăрнă, анчах çапах унăн недоимка 2.489 тенкĕ шутлапать.

«Авангард» колхоз руководителĕсем фондри укçа-тенкĕпе те тĕплĕн усă курма пĕлмеççĕ. Укçа пур çинчех вылăх-чĕрлĕх витисем, сарайсем тăвас ĕçе тăсса пыраççĕ, ик-виçĕ çул каярах тума пуçланă витене халĕ те тĕппипех туса пĕтермен.

«Будь готов», «Лесной огонек», «Красный пахарь» колхозсен вылăх-чĕрлĕхсем валли çуртйĕрсем пачах çителĕксĕр. Çавсене тума пайланман фондпа усă курма пĕлмеççĕ.

Кун пек колхозсем районра татах та пур. Çавна пула ĕнтĕ паянхи куна, районĕпе илсен, пайланман фондсене 45.525 тенкĕ хывса çитермен, урăхла каласан, çавăн чухлĕ недоимка шутланать.

Пайланман фонд—колхоза организацине хуçалăх енчен çирĕплетсе пымалли тĕп май пулса тăрать. Пайланман фонд тумасăр колхоз хăйĕн хуçалăхне пур енпе те ӳстерсе пыма, общественнăлă пурлăха аслăлатса пыма цултараймасть.

Хар. ЛИСИН.

Паха пуçару

Уяр мар çанталăкра чугунçул çинче ĕçсем нумайланаççĕ. Линисем çине тулакан юра вăхăтра тасатса тăмасан, поездсем кая юлса çӳреме пултараççĕ. Ун пек ан пултăр тесен, линисем çине хӳсе кайнă юра тасатсах тăмалла. Паллах, ку ĕç пĕчĕкĕ тата çăмăл мар. Ăна пурнăçлама ĕççыннисен анлă массине хутшăнтарни кирлĕ.

Пирĕн Çĕмĕрле станци çумне Мыслец тата Çĕмĕрле ялсовечĕсене çирĕплетнĕ. Лини çинчи юра тасатса тăрас тĕлĕшпе пире вĕсен пулăшмалла. Мĕнле пулăшаççĕ-ха вĕсем?

Çĕмĕрле ялсовечĕ ку тĕлĕшпе япăх мар ĕçлет. Ку ялсоветри колхозниксем малтанхи хут юр çусанах лини çине пĕр харăс тухрĕç, тăрăшса ĕçлерĕç. Уйрăмăнах юр тасатас тĕлĕшпе чугунçул çинче ĕçлекенсен арăмĕсен-пăха пуçарăвне палăртмалла. Вĕсем иртнĕ çулта та лайăх ĕçлерĕç. Кăçал, акă, нумаях та пулмасть, вăйлă çилтăман пулнă вăхăтра станцăри лини çине кăна мар, стрелкăсене те юр тултарса лартрĕç. Часах поездсем килмелле. Анчах çул уçă мар. Мĕн тумалла? Çак самантра весовщица Н. Филиппова юлташ тăрăшнипе эпир питех те пысăк пулăшу илтĕмĕр. Вăл организацинелĕнпе 9 хĕрарăм çул çине тухрĕç те пĕр самантрах стрелкăсене тата линисене юртан тасатрĕç.

Ытти чухне те пире хĕрарăмсем нумай пулăшаççĕ. Унпăн вĕсене чăнчăнах ырлама тивĕçлĕ.

Анчах, калас пулать, Мыслец ялсовечĕ ку енĕпе сахал пулăшать-ха. Çилтăман вăхăтĕнче çак ялсоветран çул çине питех те сахал тухаççĕ, тăрăшса ĕçлени çук.

С. ШАПКОВ.
Çĕмĕрлери чугунçул станци начальникĕн заместителĕ.

Фермăра ĕçлекенсене ĕçкунĕ хушса панă

ОКТЯБРЬСКОЕ. Калинин ячĕпе тăракан колхозра сысна ферминче пурĕ 31 сысна. Вăл шутра çитĕннĕ амасем 5 пуç. Сыснасене çитерме 494 центнер çĕрулми хатĕрлесе хунă.

1940 çулпăн государствăна аш-какай тăратас плана колхоз 100 проценчĕпех тăрăшса пурнăçланă.

План тăрăх 1940 çулта кашни амаран 0 çăвăр илес вырăнне 12-шер çăвăр илнĕ. «Рутька» ятлă ама çулталăкра 25 çăвăр панă, вĕсем пурте ӳссе çитĕннĕ.

Фермăра ĕçлекен Н. Сотников, П. Давыдов, Х. Кудряшова колхозникем фермăна лайăхлатас енĕпе тата çамрăк çăвăрсене лайăх пăхса çитĕнтересшĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсен ĕçне шута илсе колхоз правленийĕ Н. Сотникова 61 ĕçкунĕ, П. Давыдова 46 ĕçкунĕ, Х. Кудряшовăна 64 ĕçкунĕ хушса панă.

Ф. Данилов.

И. В. Бабушкина асăнса

(Вилнĕренпе 35 çул тултарнă тĕле)

Байкал çыранĕнче, халĕ Мысовая станцинчи депо вырнаçса тăракан çĕрте, ĕлĕк йывăç сарай, ун хыçĕнче сарă хӳме пулнă. Çакăнта 1906 çулти январĕн 31-мĕшĕнче патша хушнипе ĕçленĕ палачăн Меллер-Закомельский генералăн карательнăй экспедицийĕ чаплă большевика—рабочине, Ленин ученикне тата тусне—Иван Васильевич Бабушкина персе вĕлернĕ.

Мысовая станцин стрелочникĕ пулнă Я. М. Попов юлташ—çав тискер ĕçе хăй курнă çын—çакна аса илет:

«Вĕсем улттăн пулнă. Бабушкин штатски тумтир, ытти çын салтак шинелĕ тăхăннă пулнă. Вĕсене çĕрле хунар çутинче персе вĕлернĕ. Арестленĕскерсене тупикра тăракан тавар вагонĕнчен иле-иле тухнă, юпа çумне сыхса тăратнă та пере-пере вĕлернĕ... Хӳмене йăлтах пульăсем шăтарса пĕтернĕ пулнă.

Персе вĕлернĕ çĕрте 14 салтак тата пĕр офицер пулнă. Арестленĕ çынсенчен пĕрне салтаксем амантнă. Аманнăскер: «Тăканнă юншăн сире ответ тытма тиветех», тесе кăшкăрма ĕлкĕрнĕ. Тискер курайманлăхпа тăвăнса çитнĕ офицер ăна çийĕнчех персе вĕлернĕ...»

Бабушкин жандармсене хăйĕн хушаматне пĕлтермен. Çĕпĕрти революциллĕ рабочисене судсăр, следствисĕр персе вĕлернĕ патша жандармĕсем çав çын—куçран хăюллăн пăхакан, хăйсем ытти ултă çынпа пĕрле Мысовая станцинче персе вĕлернĕ çын, хĕрхенӳ ыйтман çын кам пулнине пĕлмесĕрех юлнă.

Бабушкинăн геройла вилĕмĕ çинчен Ленин 1910 çулта тин пĕлнĕ.

Владимир Ильич çапла çырнă:

«Эпир ылханлă условисенче пурăнатпăр, вăл условисенче çакăн пек япала та пулма пултарать: партин пысăк работникĕ, парти пăхса ӳстернĕ мухтавлă çын, хăйĕн пĕтĕм пурнăçне рабочисен ĕçĕшĕн панă юлташ пĕр хыпарсăр çухалать. Арăмĕпе амăшĕ пек чи сывăх çыннисем те, чи сывăх юлташĕсем те ăна мĕн пулнине çултаçкĕ-çулталăкĕпе пĕлмесĕр пурăнаççĕ...» (Ленин, XIV т., 396 стр.).

* * *

И. В. Бабушкин 1873 çулти январĕн 15-мĕшĕнче, Вологда облаçĕнчи Леденгское ялĕнче çуралнă. Унăн ашшĕ, чухăн хресчен, Леденгскире тăвар вĕретнĕ çĕрте ĕçленĕ.

И. Бабушкин 5 çул тултарнă тĕле унăн ашшĕ вилнĕ. Виçĕ пĕчĕк ачапа тăрса юлнă амăшĕн ĕç шыраса Питер хулине куçса каймалла пулса тăнă.

10 çула çитсен Иван Васильевич вакă суту-илӳ лавкинче ĕçлеме тытăннă, тавар салатса çӳренĕ. Унтан вăл Кронштадт портĕнчи торпеда мастерскойне ученик пулса ĕçлеме кĕнĕ, кунне 20 пус илсе пурăннă. 1891 çулти июнь уйăхĕнче тин ăна Питĕрти Семянников заводне слесарь пулса ĕçлемешкĕн кĕме май килнĕ. Кунта ăна кашни кунах срокран ытлашши ĕçлеме, хăш чухне вĕçĕмренех икшер куç хушши заводра ирттерме тивнĕ. Хваттере çитме 20 минута утмалла пулнă, анчах та нумай ĕçленипе вăл çавтери ывăннă, хăш чухне утса пынă çĕртех çывăра-çывăра кайнă, хунар юпи çине пырса çапăнса вăраннă тĕлсем те пулнă. «Куçа уçатăн та,—тесе аса илнĕ кайран Бабушкин,—каллех утатăн, каллех çывăрса каятăн, тĕлĕк курса пыратăн: Нева çинче кимĕпе ишсе пыратăн пек, çыран çине пырса тăрăнатăн пек...»

Этем чăтайми хаяр эксплоатаци рабочисене çиллентерсе тарăхтарнă. Бабушкин вăрттăн тухакан литературăпа тата рабочи-революционерсемпе паллашнă, çакăн хыççăн вăл рабочисен кружокĕсен питех те активлă участникĕ пулса тăнă, вырсарникаç шкулне çӳреме тытăннă. Çав шкулта Н. К. Крупская, Л. М. Книпович тата ытти революционеркăсем вĕрентнĕ.

1894 çулти кĕркуннерен пуçласа Бабушкин В. И. Ленин ертсе пыракан кружокра вĕреннĕ. «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕнчен» пĕлетпĕр эпир: Иван Васильевич çав кружокри занятисем çинчен пĕтĕм чĕререн хавхаланса калаçнă. Лартнă ыйтусене Ленин итлекенсем хăрушлăхсем çинчен сӳтсе-явмалла тума тăрăшнă. Çапла майпа рабочисем хăйсем тĕллĕн тухса калама, кĕнекепе ĕçлеме вĕренсе пынă. Кружокри занятисенче Ленин вырăнти рабочисен пурнăçĕнчи конкретлă фактсене иле-иле кăтартнă. Владимир Ильич час-часах кружок участникĕсене предприятисенче ĕçукçи çинчен, ĕç кунĕ çинчен, штрафсем тата ыттисем çинчен те сведенисем пухма хушнă. Çапла майпа пухнă сведенисемпе Ленин массăллă-политикăллă агитаци ĕçĕнче те усă курнă, çав агитацине Питĕрти марксистла кружоксенчи рабочисенчен Ленин организациленĕ «Союз борьбы за освобождение рабочего класса» сарса пынă.

Предприятисенче сарса пынă листовкăсенче «Союз борьбы» рабочисем ĕç условийĕ пирки лартакан конкретлă требованисенче уçăн палăртса панă, политикăллă задачăсене ăнлантарса панă, патша правительствине хирĕç кĕрешме чĕннĕ.

Пĕрремĕш листовкăна Семянников заводĕнчи рабочисем патне çырнă, ăна Ленин Бабушкинпа пĕрле 1894 çулта çырса хатĕрленĕ.

Иван Васильевич листовкăсем валли материалсем пухнă, «Союз борьбы» кăларнă прокламацисене предприятисенче сарнă, рабочисене хуçасемпе ларизма хирĕç кĕрешме хавхалантарса çĕкленĕ. Часах вăл хăйĕн организаторла пысăк пултарулăхне кăтартса панă. Ленина тата «Союз борьбы» организацинче ĕçленĕ ытти деятельсене арестленĕ хыççăн (1895 ç.), чылай предприятисенчи революциллĕ ĕçе Бабушкин хăй тĕллĕн ертсе пыма пултарнă. Çак вăхăтра вăл «Что такое социалист и политический преступник?» ятлă паллă листовкăна çырать, царизмпа капитализма хирĕç пыракан кĕрешӳре рабочисен чăн-чăн хӳтлевçисемпе руководителĕсем камсем пулса тăни çинчен ăнлантарса парать.

Анчах Бабушкин та ирĕкре нумаях пурăнаймасть. 1896 çулти январь уйăхĕнче ăна арестленĕ те çулталăк хушши ытла тĕрмере хупса усранă. 1897 çулти февраль уйăхĕнче ăна Екатеринослава ссылкăна янă, полици енчен асăрхаса тăмалла тунă.

Брянскри завода слесарь пулса ĕçлеме кĕнĕ хыççăн, Бабушкин çийĕнчех революциллĕ организацисемпе тата рабочисен кружокĕсемпе çыхăнать. Кунта вăл ленинла «Союз борьбы» ĕçĕнче илнĕ опытпа анлăн усă курнă: вăрттăн ĕçлекен типографи организацилечĕ, листовкăсем кăларма тата сарма пуçланă. Екатеринославри заводсенчи гумай стачкăсенче рабочисем çĕнтерчĕ. Полици вăрттăн ĕçлекен типографине, листовкăсем саракансене тата вăйлăнрах ширама тытăннă. Бабушкинăн пытанса ĕçлемелле, кайран Екатеринославран тухса каймалла пулса тăнă. 1900 çулта çулла ăна Смоленскра полици йĕрлесе тупнă, анчах Иван Васильевич унтан та тарса пытаннă. Ленин ăна пĕтĕм вырăссен ютçĕршывра организациленекен политикăллă «Искра» хаçатăн агенчĕ туса Орехово-Зуево хулине янă.

Бабушкинăн «Искра» хаçатри ĕçне Ленин чаплăн хаклать:

«Иван Васильевич ирĕкре чухне «Искрăн» чăн-чăн рабочисем çырнă корреспонденцисем çителĕклĕ пулĕç. Пăхăр-ха «Искрăн» пирвайхи 20 номерне, Шуйăран, Иваново-Вознесенскран, Орехово-Зуеворан тата Россия центрĕн ытти вырăнĕсенчен килнĕ çав мĕнпур корреспонденцисене: пурте пекех вĕсем «Искрăпа» рабочисем хушшинче чи тачă çыхăну туса хурассишĕн тăрăшнă Иван Васильевич алли витĕр тухнă» (Ленин, соч., XIV т., 396—397 стр.).

Бабушкин корреспонденцийĕсем рабочисен пурнăçĕпе ĕçĕн хăрушла йышăр условийĕсене, вырăнти влаçсемпе фабрикантсем рабочисене пусмăрласа пурăннине кăтартса панă. Пĕрре «Русское богатство» журналта фабрика инспекторĕ В. Дадонов Иваново-Вознесенскри рабочисем çинчен элеклĕ статья çырса кăларнă. Çав элеке хирĕç И. В. Бабушкин панă ответа «Искра» хаçатăн 9-мĕш номерĕ çумне приложени туса пичетлесе кăларнă. Çав ответра Бабушкин талантлă памфлетист пулни уçăн палăрать.

Бабушкин вырăнти парторганизацире пысăк ĕç туса пынă. Вăл партин Орехово-Богородск райкомне организациленĕ, вăл комитет 1901 çулти октябрьте пуринчен те малтан «Искра» хаçата хăйĕн ертсе пыракан органĕнче тесе йышăннă. 1901 çул вĕçĕ тĕлне Орехово-Богородск парторганизацин речĕнче 100 рабочине яхăн шутланнă, унăн пропагандистла кружокĕсем пулнă, вăл Дрезнăри, Ликинри, Богородскри, Городищери, Павлов Посадри т. ытти çĕрти социал-демократсемпе çыхăну тытса тăнă. Бабушкин тӳррĕмех хăй «Северный рабочий союзпа», Москаври парторганизацине тата унта ĕçленĕ Н. Э. Бауманпа çыхăну тытса пынă.

Иван Васильевич хăй пысăк революционер-профессионал пулнине кăтартса панă. Ленин хушнипе вăл пĕр хут çеç мар Москавра пулнă, унта вăл зубатовецсем организациленĕ пухусене лекме, рабочисем умĕнче выступленисем тума, «полициллĕ социализм» организацийĕсен ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларма, вăл пухусем çинчен «Искра» хаçата çырса яма пынă. Каярахпа Ленин çапла çырнă: «...Зубатов, охранник, революционерсене тытма тата вĕсене хирĕç кĕрешме черносотенла рабочи пухусемпе рабочи обществисем тунă чух, эпир çав пухусене тата çав обществăсене хамăрăн парти членĕсене яраттăмăрччĕ (эпĕ хам вĕсен хисепĕнчен Бабушкин юлташа, Питĕрти паллă рабочине, 1906 çулта патша генералĕсем персе вĕлернĕскерне, астăватăп), вĕсем массăсемпе çыхăну тытас ĕçе йĕркелесе яратчĕç, агитаци туса пыма май тупатчĕç тата рабочисене зубатовецсен влияниччен çăлса кăларатчĕç» (Ленин, Соч., XXV т., 199 стр.).

Провокатор пулăшнипе полици 1902 çул пуçламĕшĕнче Бабушкина татах тепĕр хут арестленĕ, ăна Екатеринослава йăсатнă.

Анчах та 1902 çулта çулла Бабушкина тĕрмерен тухса тарма, чикĕ урлă каçса, Лондона Ленин патне пырса çитме май килет.

«Унта нумай калаçнă, нумай ыйтусене пĕрле сӳтсе-явнă»,—тесе аса илнĕ çав тĕлпулу çинчен Владимир Ильич (Ленин, Соч, XIV т., 397 стр.).

Ленин ыйтнипе Иван Васильевич Лондонра хăйĕн асаилĕвĕсене çырнă, вăл асаилӳсем «Союз борьбы за освобождение рабочего класса» историйĕнчи питех те интереслă документ пулса тăраççĕ.

Ленин Бабушкина Питĕре янă. Çав вăхăтра Питĕрта ленинец-искровецсем «экономистсене» хирĕç пĕтĕм вăя хурса кĕрешнĕ.

Бабушкин çав кĕрешĕве татăклăн тавăлăн туса пынă, çавăнпа та Ленин хăйĕн çырăвĕнче (1903 çулти январь) Бабушкинăн çирĕп хастарлăхне уйрăмăн паллă тунă, «çаван пекех боевой хастарлăхпа, пĕр пăркаланмасăр» кĕрешсе пыма ыйтнă (Ленинский сборник VIII, стр. 317).

Ленин Питĕрти искровецсен партин II съездне пухас тĕлĕшпе ĕçлекен организациллĕ комитетăн членне (организациллĕ комитетăн Петербургран суйланă, кайран арестленĕ членĕ Б. П. Краснуха вырăнне) Бабушкина суйлама сĕннĕ, Бабушкин унта суйлама тивĕçлĕ, шанчăклă çын, тесе кăтартса панă.

Анчах та 1903 çулти январь уйăхĕнче Бабушкина арестленĕ, 5 çуллăха Верхоянска—çĕр чăмăрĕн чи сивĕ кĕтесне—ссылкăна кăларса янă.

Анчах Иван Васильевич унта та революциллĕ ĕçе пăрахман тата малалла вĕренсе пынă. Вăл вырăнти влаçсен киревсĕр ĕçĕсене хирĕç протест пама ссылкăри çынсене пухнă; ссылкăри юлташĕсене пулăшнă, вĕсене большевиксен идейисене ăнлантарнă, ĕç çине ленинла пăхма вĕрентнĕ.

1905 çулти революци Бабушкина ирĕке кăларнă. Вăл Иркутска пынă, ăна Çĕпĕрти социал-демократсен союзĕ Чита хулине ĕçлеме янă. Унта ăна РСДРП комитечĕн составне кĕртнĕ Иван Васильевич хĕçпăшалсен пысăк партине туртса илес ĕçе организацинелĕ. Рабочисен депутачĕсен Читари совечĕ, большевиксем ертсе пыраканскер, влаçа, пĕтĕмĕшпех мар пулсан та, хăй аллине туртса илнĕ, революциллĕ чылай мероприятисене пурнăçа кĕртнĕ (8 сехетлĕ ĕç кунĕ туса хунă, рабочисен дружинисене организацинелĕ т. ыт. те).

Патша правительстви Çĕпĕре Меллер-Закомельский генералăн карательнăй экспедицине кăларса янă. Иккĕлентернĕ пек туйăнакан рабочисене, салтаксене тата служащисене каратĕльсем пĕр судсăр-следствисĕрех пере-пере вĕлернĕ.

Çак вăхăтра Иркутска хĕçпăшал транспорчĕне пыракан Бабушкин Меллер-Закомельский поезчĕне тĕл пулнă. Бабушкина патша опричникĕсем арестленĕ те Мысовая станцинче персе вĕлернĕ.

* * *

Бабушкинăн пĕтĕм пурнăçĕпе революциллĕ ĕçĕ—большевикла партипе пролетариат ĕçне вĕçĕ-хĕррисĕр парăннин примерĕ, коммунизмăн пĕтĕм чĕрене парса кĕрешнин примерĕ пулса тăрать.

Д. ЕРШОВ.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Изобретатель С. П. Иванов стереоскопла экран конструкциленĕ, çак экран хальхи киноэкрансенчен пачах уйăрăлса тăрать. Стереоскопла экран кинора кăтартакан япаласене пĕтĕм калăпăшпах туйса илме, сывăхранах пек курма май парать. Çĕнĕ экран оптикăллă паллă система пулса тăрать, вăл зрительсемшĕн стереоскопла эффект тăвать. Стереоскопла кинокартинăсем ăкерме ятарласа аппаратура тунă. Халĕ «Союздетфильмăн» Мускаври студийĕ «Земля молодости» ятлă, стереоскопла цветной фильм ăкерет. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: фильмри фрагмент. Артистка В. Дулова арфа çинче вылять.

В. Шаровский фото-ăкерчĕкĕ (ТАСС).

▲ ▲ ▲

Пятилетка планне ĕç тухăçлăхĕ енĕпе виçĕ çулта тултарнă

Мускаври инструментальнăй завод, виççĕмĕш пятилетка планне ĕç тухăçлăхĕ енĕпе тăвата çулта тултарассишĕн ăмăрту пуçарса янăскер, заводăн иртнĕ çулти ĕçĕсен итогне тунă. Инструментальщиксем хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçа кĕртнĕ. План тăрăх 1942 çул вĕçне пĕр рабочи çуталăкра вăтам шутпа ĕçлесе кăларни 46.800 тенкĕлĕх пулмалла. Стахановецсем çак нормăна 1940 çултах иртерсе тултарнă. Сталинла виççĕмĕш пятилетка планне ĕç тухăçлăхне ăстерес енĕпе виçĕ çулта тултарнă.

Завод продукцин хăйне ларакан хакне иртнĕ çулта 19,7 процент чакарнă, планпа 8,8 процент пăхнă пулнă. Брак тăвассине те чылаях пĕчĕклетнĕ. ВКП(б) XVIII конференцине тивĕçлипе кĕтсе илес шутпа пыракан ăмăртăва хутшăнса, рабочисем, инженерсемпе техниксем икĕ уйăхри производствăллă плана срочлен тултарма пулнă.

Таджикистанра уйхир ĕçĕсем пуçланнă

СТАЛИНАБАД, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). Вăйлă юр çунă хыççăн хĕвеллĕ кунсем пуçланнă, улăхсемпе сăртсем çинче симĕс курăк шăтса тухнă. Яван, Нурек, Дагана-Киик, Кокташ районĕсенчи колхозсен малта пыракан бригадисем пуринчен те малтан уя тухнă, пирвайхи гектарсем çине тулăпа урпа акнă.

„Искра“ колхозри партиллĕ-хуçалăхлă конференци

СЕРГО (Ворошиловград облаçĕ), январĕн 28-мĕш. (ТАСС). «Искра» колхозра партиллĕ-хуçалăхлă конференци пулса иртнĕ. Конференцире 26 коммунист тата 50 колхозник-активист пулнă. Колхоз производствине вăйлатмалли мероприятисене сӳтсе-явнă. Иртнĕ çул колхоз паха çитĕнӳсем тунă: кашни ĕнерен 3.721 литр сĕт суса илнĕ, вăтам шутпа кашни ама сыснаран 28,8 сурă пăхса илнĕ, 100 сурăхран — 113 путек, лайăх тухăçлă тĕштырă пухса илнĕ. Колхоз 2.300 пин тенкĕ доход илнĕ.

1941 çулта колхоз хăй уйне гектартан 120 пăт тĕштырă пухса илес, кашни ĕнерен 4.500 литр сĕт суса илес задача лартнă.

Колхоз председателĕ Дудкин юлташ тунă доклад тăрăх пренисенче 15 сын тухса калаçнă. Колхоз механизаторĕ Евтухов юлташ пĕчĕк механизаци çинчен интереслĕ пыту кăларса тăратнă. Колхоза йăлтах электрификацилеменĕ, анчах та выльăх апатне алăпа хатĕрлеççĕ. Евтухов юлташ выльăх-чĕрлĕхе апат хатĕрлесе парас ĕçе, çавăн пекех парниксенчи, ледниксенчи тата ытти çĕрти хăшпĕр ĕçсене механизацилеме сĕнет.

167 миллион тенкĕ тупăш

ЛЕНИНГРАД, январĕн 25-мĕш. (ТАСС). Ленинград хулинчи тата Ленинград облаçĕнчи пиравăр предприятийĕсен 1940 çулти ĕçĕсен итогĕсене тунă. Ленинградри текстильщиксем çĕршыва 167 миллион тенкĕ тупăш панă—планпа пăхнинчен 5,3 миллион тенкĕ ытларах.

Главленхлоппромăн мĕнпур 28 предприятийĕ пурте тухăçлăн ĕçленĕ. Брак тунипе убытка пуласси пысăккăн чакнă. Сырьепа тухăçлăн усă курни кăна 19 миллион тенкĕ перекетлеме май панă.

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

БЕРЛИН, январĕн 29-мĕш. (ТАСС). Верховнăй командовани çапла пĕлтерет: Германин пĕр подводнăй лодки противникăн таварсем илсе çӳрекен суднине (11.500 тонна) путарнă.

Хĕçпăшаллă разведкăсем тунă чухне Германин пĕчченшер самолечĕсем Лондонри çар объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Кунсăр пуçне Англин хĕвелтухăç пайĕнчи пĕр хулари чугунçул сооруженийĕсем çине те бомбăсем пăрахнă. Ирландирен хĕвеланăç енче Германи бомбардировщикĕсем противникăн суту-илӳ суднине (4.600 тонна) путарнă тата çавăн пекех тепĕр икĕ суднăна вăйлăн сиенленĕ. Инçете перекен тупăсенчен ĕнер каллех Англин кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнчи вăрçă тĕлĕшĕнчен палла объектсем çине пенĕ.

Противник самолечĕсем Германи тата вăл оккупациленĕ территори çине пырса тапăнман.

ЛОНДОН, январĕн 29-мĕш. (ТАСС) Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: январĕн 29-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле противник авиацийĕ Англин хĕвеланăç çыранĕ патĕнче тинĕс çинче çаштах активлăх кăтартнă. Бомбăсем пăрахман.

Гамбург çине бомбăсем пăрахни

НЬЮ-ИОРК, январĕн 29-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Чилин Гамбург хулинчи посолĕ пулнă Кручага: юлашки çичĕ уйăх хушшинче Гамбург çине кашни кунах пырса бомбăсем пăрахнă, тесе пĕлтернĕ. Кручага халĕ çул çинче, вăл Чилине кайма тухнă.

Адмирал Редер Бременра каланă сăмах

БЕРЛИН, январĕн 29-мĕш. (ТАСС). Германири информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Бременра Германи тинĕс-çар флочĕн главнокомандующийĕ адмирал Редер пысăк сăмах тухса каланă. Германи тинĕс-çар флочĕн операцийĕсем çинчен адмирал Редер çапла каланă: вăрçă пуçланнă хыççăн пирвайхи тăватă уйăх хушшинче Германи тинĕс-çар флочĕ пысăк çитĕнӳсем тунă. Чи пысăк событи вăл — Норвеги пысăк портсене йышăнса илни пулать. Хĕвеланăçĕнче çĕнтерӳ тунипе Францире Ла-Манш çыранĕпе Атлантика çыранне хамăр алла илнипе. Англине хирĕç хĕвелтухăçпе кăнтăр енчен кĕрешмелли позицисем анланăнчĕç. Çакăнпа ĕнтĕ Англине Европа континентĕнчен уйăрса тăратас ĕçе тусса çитернĕ. Халĕ ĕнтĕ Германи тинĕс-çар флочĕн çĕнĕ опорлă пунктсем пурăвсем Англи пурнăçĕшĕн кирлĕ тинĕс çулĕсене атакăлама май параççĕ. Çав çулсем çине Атлантикăпа Инди океанĕсенче тата Лăпкă океанра — пур çĕрте те пирĕн вăйсем пырса тухма пултараççĕ.

Англи суту-илӳ флочĕн çухатăвĕсем пирки Редер çапла каланă: тинĕс çинче суднăсене каравансемпе илсе çӳренине пула карапсен тăваттăмĕш пайĕ пĕр усăсăр пĕтсе пырать. Англи суднисене сĕртесе ӳкерни ытларах малашне те ӳссе пырĕ, тенĕ Редер.

Англи авиацинчи ĕçĕсем çинчен адмирал Редер çапла пĕлтернĕ: Англи авиацийĕ суднăсем тăвакан верфьсене кӳнĕ сиенсем пысăках мар.

Германи тинĕс-çар флочĕ, тенĕ юлашкинчен Редер, противникăн сутуилӳ флочĕн нумай парохочĕсене путарнă. Путарнă пароходсен пĕтĕм тоннажĕ — 6,3 миллион тонна шутланать. Çак тоннажăн виçĕ пайĕнчен икĕ пайне Германин подводнăй флочĕ путарнă. Редер каланă тăрăх, Германи çухатăвĕсем пысăк мар.

Албанири вăрçă ĕçĕсем

АФИНЫ, январĕн 29-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: ĕнер фронтра вырăнĕ-вырăнĕпе кăна çапăçусем пулса иртнĕ. Çынсене тыткăна илнĕ: самолетсене хирĕç перекен артиллери Италин икĕ самолетне персе антарнă. Ĕнер противник авиацийĕ Салоники çине бомбăсем пăрахнă. Пĕр çын вилнĕ, 10 çын аманнă. Кунсăр пуçне Македонири темиçе ял çине бомбăсем пăрахнă. Сиен пулман, çынсем хушшинче те аманнисемпе вилнисем çук.

«Катимирини» хаçат çырнă тăрăх, фронтăн центральнăй секторĕнче противник контрнаступлени пуçланă, анчах та грексем пит вăйлăн хирĕç тăнипе противник хăйĕн малтанхи позицийĕсене кӳснă. Итальянецсенне малтантарах йышăннă позицийĕсене вĕсенчен тасатса пынă чухне Греци çăмăлттай шухăшлă критиксене ятлать; вĕсем, тет хаçат, «Италине вăрçă тĕлĕшĕнчен мĕн çитменнине кăна кураççĕ». Италине, тет хаçат, «çĕнĕ империн инçетри чиккисенче, противник çĕрĕсем хушшинче çăсăланса выртакан чикĕсенче кĕрешме тивет». Анчах та хальхи вăхăтра, тет хаçат, Италипе Германи противнике аркатмаллах çапса хуçма хатĕрленеççĕ. «Тобрук пире çакна вĕрентет, — тет юлашкинчен хаçат, —Порт-Саидпа Гибралтарта Англи флагĕ вĕлкĕмсе тăнă чух, Хĕрлĕ тинĕсе кĕмелли вырăна Аден контроллесе тăнă чух, Мальтăпа Бизерта Итали çар системин пайĕ пулса тăриччен—Италия лару-тăрусенче хуçа пулма пултараймасть».

ИТАЛИ КОМАНДОВАНИЙĔН СВОДКИ

РИМ, январĕн 29-мĕш. (ТАСС). Итали командованийĕ çапла пĕлтерет: Греци фронтĕнчи пысăк мар çапăçусенче Итали войскисем паха позицисене туртса илнĕ, чылай çынна тыткăна илнĕ тата тĕрлĕ вооруженисем туртса илнĕ. Итали авиацийĕ çулсем çине, противник позицийĕсемпе батарейисем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Салоникири çар объекчĕсене, çавăн пекех Афины чугунçулне пысăк сиен тунă. Противникăн пиллĕк самолетне персе антарнă. Италин 2 самолечĕ хăйсен базисене тавăрăнман.

Киренаникăра, Дернăран кăнтăр енче, противникăн бронетанковăй дивизийĕ пуçланă атакăна сирсе янă. Противник пысăк çухатусем кӳнĕ. Итали авиацийĕ противникăн пысăк мар бронетанковăй отрячĕсемпе грузовикĕсем çине бомбăсем пыра-пыра пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ.

Хĕвелтухăç Африкăра, Галлабат районĕнче, противник атакине сирсе янă.

Кенири фронтра Итали войскисем противник войскисене хирĕç пĕр хут çеç мар атакăсем тунă. Противник каялла чакнă. Итали авиацийĕ противник грузовикĕсемпе войскисем çине ăнăçлăн бомбăсем пырса пăрахнă. Англи самолечĕсем Асмара çине пыра-пыра тапăннă, анчах нимĕнле сиен те кӳреймен.

„Пополо д'Италиа“ хаçат Тобрука англичансем туртса илни çинчен

РИМ, январĕн 29-мĕш. (ТАСС). Пополо д'Италиа» хаçат «Тобрук урокĕсем» ятлă статья пичетлесе кăларнă. Хаçат çапла çырать: «Вăрçă енĕпе илсе пăхсан, Тобрука англичансем туртса илни вăл—Бардия парăннинчен тухса тăнă инкек».

Хаçат хăшпĕр çăмăлттай шухăшлă критиксене ятлать; вĕсем, тет хаçат, «Италине вăрçă тĕлĕшĕнчен мĕн çитменнине кăна кураççĕ». Италине, тет хаçат, «çĕнĕ империн инçетри чиккисенче, противник çĕрĕсем хушшинче

Де Голль генерал войскисем Ливине пырса кĕнĕ

НЬЮ-ИОРК, январĕн 29-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, де Голль генералăн мотомехчăсĕсем, Чад кӳлли патĕнчен (Франции Экваториальнăй Африкинчи колонийĕ) малалла куçса пырса, 800 миля кайнă, вĕсем Ливирен кăнтăр-хĕвеланăç енче Мурзук ятлă оазиса илнĕ. Çапла вара, итальянецсемшĕн кунта çĕнĕ фронт пулса тăнă.

* * *

Мурзук — кăнтăр-хĕвеланăç Ливие Вăтаçĕр тинĕс хĕрринчи Триполи ятлă хулапа çыхăнтарса тăракан чугунçул вĕçĕнчи пункт. Мурзукра пиллĕк пин çын ытла пурăнать. Мурзук урлă каравансен çулĕпе Франции Экваториальнăй Африкипе тата Англо-Египет Суданĕпе суту-илӳ туса тăнă.

Франци Индо-Китайĕпе Таи хушшинчи чикĕри лару-тăру

НЬЮ-ИОРК, январĕн 29-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Таи верховнăй командованийĕ: Франци Индо-Китайĕ перемирине пăсрĕ, тесе пĕлтернĕ. Пур фронтсенче те тенĕ пекех çĕнĕрен вăйлă çапăçусем пуçланнă.

Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Таипе Индо-Китай пĕр-пĕрине перемирине пăснă тесе айăпласççĕ. Кунпа пĕрлех Сайгон хулине паян пуçланакан каласусенче пулма Японипе Таи делегацийĕсем çитни çинчен пĕлтереççĕ.

НЬЮ-ИОРК, январĕн 30-мĕш. (ТАСС). Америкăри хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Таипе Франци Индо-Китайĕ хушшинчи мирлĕ каласусене хутшăнма уйăрнă Таи делегацийĕ, кабинет ларăвĕ хыççăн, самолетпа Сайгона вĕçсе кайнă.

Çĕрле чикĕре çапăçусем пынă. Хăшпĕр çынсем Таипе Индо-Китай хушшинче мир туса хурасса шансах кайманнине çĕнĕ. Таири хаçатсем Индо-Китая хирĕç вăрçă ĕçĕсене малалла туса пыма ыйтаççĕ.

Япони, Франци Индо-Китайĕпе Таи представителĕсем Японин «Натори» ятлă крейсерĕ çинче тĕл пулнă та ĕнтĕ.

Сайгонри власссем: Франци Индо-Китайĕ перемирине пăснă, текен хыпар тĕрĕс мар, тесе пĕлтереççĕ. Январĕн 28-мĕшĕнче ирхине 10 сехетре чикĕре пĕр-пĕрин çине пеме чарăннă.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Центральнăй Китайра, Хубэй провинцийĕн кăнтăр пайĕнчи Данян районĕнче, Китай войскисем японецсен позицийĕсене атакăланă. Çавăн пекех Ичан районĕнче те çапăçусем пыраççĕ.

Хэнань провинцийĕн кăнтăр пайĕнче Синьянран çурçĕр еннелле наступлени туса пыракан японецсемпе Китай войскисем хушшинче çапăçусем пыраççĕ. Японецсен хăшпĕр отрячĕсем Синьян патĕнчен 30 километр малалла кайнă.

Çурçĕр Китайпа Кăнтăр Китайри лару-тăру çинчен сведенисем çук.

Январĕн 28-мĕш. (ТАСС).

Юлашки виçĕ кун хушшинче Центральнăй Китайра, Хэнань провинцийĕн кăнтăр пайĕнчи Синьян районĕнче, хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Японин 4,5 пине яхăн салтакĕ Синьянран çурçĕр-хĕвеланăç еннелле наступлени туса пырать.

Хубэй провинцинчи Цзинмынь районĕнче çапăçусем пыраççĕ, кунта Китай войскисем японецсен атакине сирсе янă. Çапăçура вилсе тата аманса 500 çын ытла стройран тухнă хыççăн, японецсем хăйсен малтанхи позицийĕсем çине чакнă.

Çурçĕр Китайпа Кăнтăр Китайри лару-тăру çинчен сведенисем çук.

Январĕн 29-мĕш. (ТАСС).

Румыни р.1 событисем

БУХАРЕСТ, январĕн 29-мĕш. (ТАСС). Румынири хаçатсем çапла пĕлтереççĕ: январĕн 25-мĕшĕнче çар сучĕ çар летчикĕсен шкулĕнче вĕренекен 17 çынăн ĕçне пăхса тухнă, вĕсене легионерсем енче пăлхава хутшăннăшăн айăпланă. Судпа айăпланă çынсене пурне те 3—10-шар çул хушши каторгăра ĕçлет-термелле тунă.

Генерал Антонеску кăларнă приказ тăрăх, «камшăн пăлхавçăсем енчен хăрушлăх пулнă е вĕсемшĕн çав хăрушлăх халĕ те пур пулсан, çавăн пек çынсем хăйсемпе пĕрле хĕçпăшал илсе çӳреме çар гарнизонĕнчен ирĕк ыйтса илме пултараççĕ».

Греци премьер-министрĕ Метаксас вилнĕ

АФИНЫ, январĕн 29-мĕш. (ТАСС). Греции телеграф агентстви çапла пĕлтерет: «нумай мар вăхăт чирлесе выртнă хыççăн, паян ирхине 6 сехет те 20 минутра, хăйĕн резиденцийĕнче Греци правительствин пуçлăхĕ Жан Метаксас вилнĕ».

Çĕнĕ кабинета, тет агентство, халиччен кабинет членĕсенченех туса йĕркеленĕ. Çĕнĕ премьер-министр — Александр Коризис. Паян ирхине 10 сехетре çĕнĕ кабинет короле присяга панă.

Германи летчикĕ тытăнран тухса тарнă

БЕРЛИН, январĕн 29-мĕш. (ТАСС). Германири информаци бюровĕ çапла пĕлтерет: Германири палла летчик-истребитель старший лейтенант Франц де Верра англичансен аллине тытăна лекнĕ пулнă, англичансем ăна Англирен Канадăна янă. Лейтенант Верра тытăнран тухса тарнă, хальхи вăхăтра Нью-Йорка пырса çитнĕ.

Осоавиахим хула совечĕн пленумĕ

Январĕн 29-мĕшĕнче, Колхозник çуртĕнче, Осоавиахимăн Шупашкар хула совечĕн чĕретлĕ VIII-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум Осоавиахим членĕсене çар ĕçне вĕрентесси мĕнле пыни çинчен Наркомзем тата тир-сăран комбиначĕ çумĕнчи Осоавиахим пуçламĕш организацисен отчечĕсене итлесе сӳтсе-яврĕ.

Осоавиахим членĕсене çар ĕçне вĕрентесси çак асăннă организацисенче çителĕксĕр пулса пырать. Наркомзема çар ĕçне вĕрентес ĕçе урăхлатса çĕнетме тытăннă пулин те, чылай ситменлĕхсем палăраççĕ. Унта çар ĕçне вĕренме 2 группа организациленĕ. Анчах группăсенче вĕренекенсен хисепĕ питĕ пысăк. Вĕсем группăсене тумалли йĕркене пăснă. Вĕренекенсем занятисене йĕркеллĕ çӳреме çĕ çĕ.

Трофимов (Наркомзем) çар ĕçне вĕрентме командирсем тата ытти условисем те çителĕкли çинчен каларĕ. ГТО, ПВХО, ГСО кружокĕсем те организациленĕ. Анчах ку кружоксенче пĕр заняти те иртмен.

Тир-сăран комбинатĕнче те (Осоавиахим пуçламĕш организаци совечĕн председателĕ Мухамедзянов юлташ) çар ĕçне вĕренме тытăнманпа пĕрех. Унта çар ĕçне 115 сехетлĕ программа тăрăх вĕренме палăртнă. Группăсене 60 çынна явăстарнă. Паха ĕçсем тума пăхнă пулин те, занятисем иртерме тытăнман-ха.

Чылай организацисенче йĕлтĕрçĕсен ăмăртуне хатĕрленесси анлăн сарăлса пырать. Наркомземпа тир-сăран комбинатĕнче паянхи кунччен пĕр çын та йĕлтĕр çине тăман. Осоавиахим пуçламĕш организацисем ку ĕçе пуçарса пыман.

Çар ĕçне вĕренме учебниксем тата пособисем çитмеççĕ. Çак сăлтав занятисем иртерме чăрмантарса тăрать. Осоавиахим хула совечĕ те учебниксем тупса паман.

Пленумра Чăваш АССР Осоавиахим Центральный Совечĕн председателĕ С. Павлов юлташ тухса каларĕ. Вăл Осоавиахим членĕсене çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе пуçламĕш организацисем çителĕксĕр ĕçлесе пыни тата ку ĕçри ситменлĕхсене пĕтересси çинчен чарăнса тăчĕ.

Пленум сӳтсе-явнă ыйтусем тăрăх тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

ВРАЧ КАНАШĔСЕМ

РАК ЧИРĔ

Рак чирĕпе тĕнчере кашни çулах пĕр миллиона яхăн çын вилет. Ытти чирсемпе вилекенсем хушшинче рак 3—4-мĕш вырăн йышăнса тăрать.

Мĕнле чир вăл рак?

Ут çине е урăх-çĕре шыçă (опухоль) тухса ларнине пурте пĕлеççĕ е курнă пулĕ. Хăшĕсен вăл пăрçа пек пĕчĕккĕ кăна, теприсен чăх çăмарти пек е пысăкрах та пулать. Çавăн пек питĕ ерипен, темиçе çул хушши ыратмасăр ӳсекен шыçăсене «ырă» («доброкачественный») шыçă теççĕ. Вĕсем çын сывлăхĕшĕн хăрушах мар. Тепĕр тĕслĕ шыçăсем питĕ хăвăрт ӳсеççĕ, сывлăха часах пĕтереççĕ, ун пеккисене вара «усал» («злокачественный») шыçă теççĕ. Çаксем шутне чи малтан рак кĕрет. Рак епители клеткисенчен ӳсет, ӳснĕ май унăн клеткисем хăй шăтса тухнă вырăнти е органăн клеткисем пек мар, урăх тĕрлĕ пулса каяççĕ. Рак шыçă питĕ хăвăрт ӳсет, хăй çитеннисĕр пуçне вăл юнашар тканьсене те ӳссе кĕрсе каять. Унтан тата, лимфа тымарĕсем тăрăх кайса, ытти органсем е лимфа железисем çине куçать. Рак шыçă ыратмасть. Çавăнпа унпа чирлĕ çынсем вăхăтра больницăна кайса кăтартмасăр чире шалалла яраççĕ, вара ăна имĕнле майпа та сыватма май килмест.

Рак чирĕпе пуринчен ытла вăтам çулхи ватă çынсем чирлеççĕ. Çамрăк вăхăтра ракпа чирленине питĕ сайра кăна тĕл пулма пулать.

Мĕнрен пуçланать-ха рак чирĕ?

Сăлтавне унăнне халĕ те тĕплĕн пĕлмеççĕ. Теорисем чылай, анчах пуринчен тĕрĕсрехи раздражени çинчен калаканни пулать. Пĕр-пĕр вырăна е органа мĕн те пулин пĕрмай раздражать туса тăрать пулсан, унта вара пурăна-киле рак пуçланать. Сăмахран, Индире чĕлхене хытă раздражать тăвакан курăк çулçисен тĕвекне (бетель) нумай çиеççĕ. Çавăнпа унта чĕлхе е тута-çăвар ракĕпе чирлекенсем питĕ нумай шутланаççĕ.

Рак епители клеткисем пур органсенче пур çĕрте те пулма пултарать. Кунта эпир пуринчен ытларах чирлекен органсем çинче чарăнса тăрăпăр.

Аялти тута хĕррине рак шыçă табак ытла нумай туртакан тата ытла вĕри сисе-ĕçсе пурăнакан çынсене тухать. Кун пек чух тута хĕрри çурăлса, суранланса, хытса тата кĕсенленсе ларать. Вăл суран имĕнле им-çама та парăнмасть, сарăлнăçемĕн сарăлса, шалалла кайса пырать. Часах янах шăмми айĕнчи железасем те пăрçа пек е унтан та пысăкрах ӳссе каяççĕ (рак лимфа тымарĕсем тăрăх куçма та ĕлкĕрнĕ). Татах вăхăт иртсен рак янах шăмми çине те куçма пултарать.

Кăкăр желези çинчи рак малтан шалта, тĕпĕнче хытă йăванчăк тухнинчен пуçланса каять. Кайран ӳссе шыçă пулса тăрать, ĕмкĕч вĕçĕ шалалла таврăнса кĕрет. Ку вăхăтра хул хушшинчи железасем ӳссе кайнине алăпа хыпашласах пĕлме пулать. Кăкăр железин ракĕпе хĕрарăмсем чирлеççĕ.

Матка ракĕ чи малтан имĕнĕ сăлтавсăрах шĕвек, сарă юн юхма пуçланнипе палăрать. Матка ракĕ хырăмри органсене час куçать.

Рак пырта пуçлансан çын малтан хытă апат (çăкăр тата ыт.) анми пулнине сисет. Пурăна-киле апат каякан аш-какай апатне курас килми пулать, хырăмра кислота вăхал, çăгмест, çинĕ апат хăйне кирлĕ пек чăмланса, пиçĕнсе каймасть. Рак шыçĕ хырăм çулне питĕрсе лартма пуçласан сыч çинĕ хыççăнах хăсса вăларать. Кун пек çын хытă ырханланса пырать, ăна сарă-хура сăн çапать. Калас пулать, рак чирĕпе чирлĕ çын яланах пĕтсе («ирĕлсе») пырать. Вăл пĕр енчен, рак шыçĕн наркăмăшĕсем организма отравить тунинчен, тепĕр енчен, аппетит пĕтнинчен е апат анми пулнинчен килет.

Ман хырăм ракĕпе чирлисем малтан хырăм катарĕпе асапланса пурăннă çынсем хушшинче ытларах тĕл пулаççĕ. Хырăм язви те 5 проц. рака куçать.

Рак чирĕ ересрен хăрамалла мар, вăл çын çине сикмест. Çапла, рак кирек ăçта пулсан та хăвăрт ӳсет. Çавăнпа ăна çийĕнчех пĕлсе вăхăтра сывалма тытăнмалла. Хăвăрт ӳсекен шыçă пулсан вăхăта сая ямасăр врач патне кайса кăтартмалла, апат анми пулсан тата хăстарма пуçласан рентген витĕр пăхтармалла. Халь рентген витĕр пăхса ман хырăм ракне пуçламĕшĕнчех пĕлме пултараççĕ.

Рак чирне операци туса тата сутăпа (радий, рентген) сыватаççĕ. Малти вырăна операци йышăнса тăрать. Вăхăтра операци тусан кăкăр желези ракĕпе чирлисем хушшинче пуçĕпех сывалаканнисем 60—80 проц., матка ракĕпе—70—80 проц., тута хĕрри ракĕпе—90—95 проц. шутланаççĕ. Çакăнтан курăнать ĕнтĕ, рак—питĕ хăруш чир, ăна сыватас пулсан çийĕнчех тимлени кирлĕ.

Рак чирĕнчен сыхланма майсем пур. Чи малтан хăвна хуйĕркесĕр пурăнса вăхăтсăр пĕтересрен сыхланмалла, унпа пĕрлех организма çирĕплетме пулăшакан майсемпе (физкультура тата ыт.) пурнăçра ытларах усă курмалла. Шутран тухса ĕçни, табак нумай туртни, ытла вĕри апат-çимĕç çисе пурăнни, пăсăлнă шăлсене тӳрлетменни, ӳт-тире таса тытманни тата ыт. Çаксем пурте ракпа чирлеме пулăшакан сăлтавсем пулса тăраççĕ. Унтан тата, тĕрлĕрен хронически чирсем (хырăм катарĕ, язва, матка чирĕсем т. ыт) органсене пĕрмай раздражать туса тăрса, рак чирне куçма пултарнине нихăçан та манас пулмасть. Çавăнпа вăл чирсенчен вăхăтра сывалмалла.

Йĕркеллĕ, хăвна астуса, таса, çирĕп тата тутăлăхлă пурăнакан çынсăн рак хăрушă мар. Кун пек пурăнма пирĕн çĕршывра условисем ытлашшипех пур. Ĕç—хамăрта кăна.

Врач К. ПАЙРАШ.

Литература хроники

Чăвашсен Государство издательствинче Иван Мучин «Кулăшла калавĕсем» ятлă кĕнеке пичетленсе тухрĕ. Сборнике писатель юлашки çулсенче çырнă калавсем кĕнĕ. Пысăкрах калавсем çаксем: «Çук турăсен «Çук ту» çинчи конференцийĕ», «Мĕскĕн Упанкка», «Тĕшмĕш чăпти», «Ийлай Йăкăначĕ» т. ыт. те.

* * *

Çак кунсенчех вырăссен паллă позчĕн Владимир Владимирович Маяковскин «Сăвăсен пуххи» сборникĕ пичетленсе тухать. Сборнике Вл. Маяковскин «Лайăх», «Совет паспорчĕ çинчен», «Нетте юлташа—парохода—этеме», «Çулла дачăра Владимир Маяковский курнă тĕлĕнмелле мыскара» т. ыт. произведенисем кĕнĕ. Сăвăсене Стихван Шавлыпа Арк. Эсхель куçарнă.

* * *

Художествăллă произведенисене пичете парас умĕн, вĕсене тĕплĕн тишкерсе тухса, произведени пахалăхне лайăхлатас шутпа Чăвашиздат çумĕнче художествăллă Совет организацилеççĕ. Критикăпа библиографи ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе те художествăллă Совет пысăк пулăшу парса пымалла.

Виççĕмĕш пятилетка заемĕн тиражĕ

Февралĕн 1-мĕшпе 2-мĕшĕнче Запорожье хулинче Виççĕмĕш Пятилетка (пĕрремĕш çулти кăларăм) заемăн тăххăрмĕш тиражĕ пулса иртет. Пĕтĕмпе 83.240.600 тенкĕлĕх 518.500 выигрыш пулмалла. (ТАСС).

Срочнăй вкладсем ӳссе пыраççĕ

Перекет кассинче укçа-тенкĕ усракансен йышĕ çулран çулах ӳссе пырать. Ĕçсыннисем хăйсен ытлашши укçа-тенкине перекет кассинче срочнăй вкладсемпе хурса государствăна пысăк усă кӳреççĕ. Çавăн пекех хăйсем те укçа хывса усранăшăн процент укçи илсе пысăк тупăш кураççĕ.

1940 çулта республика тăрăх перекет кассисенче срочнăй вкладсем усракансем 1054 çын пулнă, вĕсем 2.211.000 тенкĕ усранă. 1941 çулти январĕн 1-мĕшне срочнăй вкладсем 1776 çын хывнă, вĕсем 3.771.000 тенкĕ усраççĕ.

Шупашкар хулинчи перекет кассинче срочнăй вкладсем 756.000 тенке, Улатăрта 713.000 тенке, Канашра 82.000, Етĕрнере 288.000 тенке çитеççĕ.

Республикăри хуласенче тата районсенче перекет кассисенче срочнăй вкладсем хывса усрасси ӳссех пырать.

ПĔЛТЕРНИ

14-мĕш номерлĕ суйлав участокĕ Ярославский урамри 54-мĕш номерлĕ çуртра (4-мĕш номерлĕ шкул), пĕрремĕш хутра ĕçлет.

Суйлавçăсен списокĕсене илнĕ, 14-мĕш номерлĕ участокри суйлавçăсене списока тĕрĕслеме чĕнетпĕр. Çак вăхăтра тĕрĕслеме пулать: канмалли кунсенче 10 сехетрен пуçласа 23 сехете çитиччен, ытти кунсенче 19 сехетрен пуçласа 23 сехете çитиччен.

14-мĕш номерлĕ участокри суйлав комиссийĕ.

Ответлă редактор Р. О. МАЛЮТИН.

ВНИМАНИЮ КНИГОТОРГУЮЩЕЙ СЕТИ КОГИЗА И ЧУВАШСОЮЗА

В складе Госиздата Чувашской АССР имеются в наличии выборная литература на чувашском языке:

1. Положение о выборах в Верховный Совет ЧАССР . . Цена 15 коп.
2. Положение о выборах в Верховный Совет РСФСР . . . 15 „
3. **Вышинский**—Положение о выборах в Верховный Совет СССР (в вопросах и ответах), ... 30 „
4. Конституция (Основной Закон) Чувашской АССР . . . 20 „
5. Конституция (Основной Закон) Союза ССР . . . . . 25 „
6. **Сталин**—Доклад о проекте Конституции СССР . . . . 25 „
7. **Сталин**—Речь на предвыборном собрании избирателей Сталинского избирательного округа г. Москвы . . . . 10 „
8. **Молотов**—Об избирательном блоке коммунистов с беспартийными . . . . . 15 „
9. **Жданов**—Речь на собрании избирателей . . . . . „ 20 „

Госиздат Чуваш. АССР.

2—1

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. Телефонсем: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн—0—88, çыру-сем рабселькорсен пайĕн —2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн — 6 — 23, «Ленин çулĕпе» жур-налăн — 0 — 85, издательство заведующийĕн—5—38, конторăн—0—23.

НТ 2208.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 2. Ф. Б. 9×84 п. л.